...им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Октябрь 4 ВЫРСАРНИКУН № 194 (9103)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

„Машина-трактор станцийĕсен ĕçне лайăхлатассине пысăк вырăна хурса, СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене, КПСС обкомĕсемпе крайкомĕсене çапла тума хушаççĕ: МТС-сене ертсе пырассине лайăхлатмалла, колхоз производствин мĕнпур отраслĕсенче ĕçе механизацилес тĕлĕшпе МТС-сен ĕçне вăйлатмалла, ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна — ялхуçалăхĕн мĕнпур культурисен тухăçлăхне чылай ӳстерес, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне малалла нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне чылай ӳстерес, çĕрĕçĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн пĕтĕм продукцине тата таварлă продукцине ӳстерес задачăна ăнăçлă татса парас тĕлĕшпе машина-трактор станцийĕсен ответлăхне ӳстермелле"

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă Постановленирен.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитетĕнче

Машина-трактор станцийĕсен ĕçне малалла лайăхлатмалли мерăсем çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çакна палăртаççĕ: юлашки çулсенче ялхуçалăх ĕçĕсене механизациленин чылай ӳсрĕ, колхоз производствинче ĕçе татса паракан вăйă пулса тăракан машина-трактор станцийĕсен ролĕ тата ытларах пысăкланчĕ.

1952 çулта колхозсенчи ĕçсене механизациленин çакăн чухлĕ пулнă: тĕштырăсене акни—87 процент, тĕштырăсене комбайнсемпе пухса кĕртни—70 процент, çĕртме сухи туни—96 процент, кĕрхи çĕртме сухи туни—97 процент, хлопчатник акни—98 процент, сахăр кăшманĕ акни—95 процент. Ĕç вăйĕ нумай ыйтакан ытти ĕçсене механизациленин те чылай ӳснĕ. Машина-трактор станцийĕсем колхоз производствин мĕнпур отраслĕсенче çултан-çул ытларах ĕçсем тăваççĕ.

Анчах машина-трактор станцийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Нумай МТС-сем тракторсемпе тата ялхуçалăх машинисемпе çителĕксĕр усă кураççĕ, колхозсемпе тунă договорсем тăрăх илнĕ обязательствăсене, уйрăмах уй-хир ĕçĕсене, вăхăтра тата паха тăвас енĕпе пурнăçламаççĕ, колхозсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе государство планĕсене пурнăçлаймаççĕ. Колхозсенче ĕç вăйĕ нумай ыйтакан ĕçсене, уйрăмах çĕрулми тата пахча çимĕçсем туса илес тĕлĕшпе, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсене сахал механизациленĕ, ку вăл ялхуçалăхĕн çав отраслĕсем кая юлнин сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать.

МТС-сен производствăпа финанс ĕçĕсене организацилес енĕпе пысăк çитменлĕхсем пур, колхозсене агрономи пулăшăвне парассине çителĕксĕр организациленĕ.

МТС-сен механизаторсен ялан ĕçлекен кадрĕсем, çавăн пекех ертсе пыракан тата инженерла-техникла квалификациллĕ кадрсем çителĕксĕр, машинăсене юсамалли база вăйсăр тата машина-трактор паркне техника енĕпе пăхассине çителĕксĕр йĕркеленĕ, МТС-сенчи строительство тата вĕсене материалсемпе техника парасси МТС-сен ĕçĕн ӳсĕе пыракан пысăкăшĕнчен тата нумай отраслеллĕ колхоз производстви аталанса пынă май машина-трактор станцийĕсем умне тухса тăнă требованисенчен кая юлнă, — çаксем пĕтĕмпех МТС-сен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсен тĕп сăлтавĕсем пулса тăраççĕ.

Чылай МТС-сенче халĕ те лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ трактористсем, трактор бригадисен бригадирĕсем, комбайнерсем тата ытти специальноçлă работниксем çитмеççĕ. Механизаторсен кадрĕсем улшăнса тăнине пĕтермен. Нумай трактор бригадисенче ялан ĕçлекен прицепщиксем çук.

Хальхи йĕрке тăрăх трактористсем, бригадирсем тата трактор бригадисенчи ытти работниксем МТС-сенчи ялан рабочисем шутланмаççĕ, вĕсем уй-хир ĕçĕсене тунă вăхăтра ĕçлеме уйăрнă колхозниксем пулаççĕ, кун пек йĕрке кадрсен квалификацине пĕрмаях ӳстерсе пыма, техникăпа тухăçлăрах усă курма тата ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне ӳстерсе пыма пулăшмасть.

Çак сăлтавсене пула нумай машина-трактор станцийĕсенче трактористсемпе комбайнерсен чылай пысăк пайĕ сменăри нормăсене тултарса пымасть, ĕçсене пысăк пахалăхпа тумасть, машинăсене техника енĕпе пăхмалли правилăсене пурнăçламасть, тракторсемпе ялхуçалăх машинисем ĕçлемесĕр тăни нумай пулать.

Механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Нумай облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче ялхуçалăх механизаци шкулĕсем çителĕксĕр усă, çавна пула МТС-сен трактористсене, комбайнерсене, трактор бригадисенчи ытти работниксене те кĕске сроклă курссенче вĕрентмелле килет, кун пек чухне çав кадрсене кирлĕ пек лайăх вĕрентсе хатĕрлеме май килмест.

Нумай машина-трактор станцийĕсенче машинăсене юсамалли мастерскойсем, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене усрамалли гаражсемпе сарайсем, çавăн пекех тата производство, хуçалăх çурчĕсем тата пурăнмалли çуртсем çителĕклĕ çук.

МТС-сене материалсемпе техника парса тăрас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Запаслă пайсене, инструментсене, металсемпе ытти материалсене нумай чухне МТС-сем вăхăтра тата çителĕклĕ илеймеççĕ, çавна пула машина-трактор паркĕн ĕçĕнче пысăк чăрмавсем пулаççĕ. МТС-сен нефть продукчĕсене усрамалли вырăнсем кирлĕ чухлĕ çук.

Малта пыракан МТС-сен, трактор бригадисен, лайăх ĕçлекен трактористсен, комбайнерсен, машинистсен тата ытти механизаторсен опытне тĕпчесе вĕренес тата сарас ĕçе питĕ çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Колхозсене агрономипе зоотехника енĕпе пулăшмалли хальхи йĕрке тăрăх, ялхуçалăхĕн пĕр специалисчĕ темиçе колхозра ĕçлет, çакăн пирки специалистсем ĕçшĕн ответ тытмаççĕ, кун пек йĕрке ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсемпе килĕшсе тăмасть. Кун пек чухне агрономсем, зоотехниксем тата ытти ялхуçалăх специалисчĕсем нумайăшĕ колхоз производствин организаторĕсем пулмаççĕ, вĕсем агрономипе зоотехника кăтартса паракан ĕçсене, наукăпа колхозсенчи малта пыракан опытăн çитĕнĕвĕсене пурнăçлас ĕçе хăйсем тӳрех хутшăнмаççĕ.

Машина-трактор станцийĕсен ĕçне малалла лайăхлатса пыни ялхуçалăхне аталантарма тата çĕклентерсе пыма, хамăр çĕршывра халăх валли апат-çимĕç тата çăмăл промышленность валли чĕр-тавар питĕ нумай пулмалла тума кирлĕ условисем пулса тăнине шута илсе, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче йышăннă Постановленине килĕштерсе, çапла йышăнчĕ:

I.

МТС-сенчи механизаторсен яланхи кадрĕсем çинчен

1. Машина-трактор паркĕпе усă курассине лайăхлатма, трактор бригадисенчи работниксен ĕç тухăçлăхне ӳстерме, вĕсем колхозсенче ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçлă туса илессишĕн ытларах интересленмелле тата ответлă пулса тăмалла тума, çавна май МТС-сенче ялан ĕçлекен механизаторсен кадрĕсем пулччăр тесе, çакăн пек йĕрке тăвас: машина-трактор тата специализациленĕ станцисенче трактористсем, трактор бригадисен бригадирĕсем, бригадирсен помощникĕсем, экскаватор машинисчĕсем, экскаватор машинисчĕсен помощникĕсем тата учетчик-заправщиксем, комбайнерсем, механик-комбайнерсем, çĕр мамăкĕ пухса кĕртмелли машинăсен механик-водителĕсем тата йĕтĕн татмалли, йĕтĕн тылламалли тата кантăр пухса кĕртмелли машинăсен машинисчĕсем яланхи рабочисем пулаççĕ, прицепщиксем тата ялхуçалăх машинисемпе çĕр чавакан машинăсем çинче ĕçлекен машинистсем тата комбайнерсен помощникĕсем — сезонлă рабочисем пулаççĕ.

Колхозсенче улăмпа арпа таврашне вăхăтра пухса кĕртсе купалани шултра апат хатĕрлес ĕçре тата агротехникăлла паха ĕçсен—хăмăла сухалас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсен планне пурнăçлас ĕçре пысăк вырăнта тăнине шута илсе, МТС-сене, кирлĕ чухне, тĕштырă культурисене пухса кĕртнĕ вăхăтра, купасем, капансем тумалли механизмсемпе волокушăсем çинче ĕçлеме сезонлă рабочисем тытма, çавăн пекех тата улăмури тăвакансене тытса тăма ирĕк парас, çак рабочисене прицепщиксене тӳленĕ йĕркепе тӳлемелле.

Çакăн пек йĕрке тăвас: уй-хир ĕçĕсене тунă вăхăтра колхозсем МТС-сен сезонлă рабочийĕсем пулса МТС-сен машинисемпе ĕçлеме колхозниксене кирлĕ чухлĕ уйăраççĕ. Сезонлă рабочисем пулса ĕçлеме уйăрнă колхозниксене МТС килĕшсен çеç урăх ĕçе куçарма юрать.

2. Çакăн пек йĕрке тăвас: трактор бригадисенчи рабочисене тракторсемпе, ялхуçалăх машинисемпе тата çĕр чавмалли машинăсемпе ĕçленĕшĕн машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисем тата колхозсем хальхи йĕркепех — ĕçкунĕсем тата сдельнăй расценкăсем тăрăх тӳлеççĕ.

Трактор бригадисенчи рабочисене, чăннипе мĕн чухлĕ тырпул пухса илнине кура, тырпул тухăçлăхне ӳстермелли планлă заданисене пурнăçланăшăн хушса тӳлемелли тата ĕçкунĕсем хушса памалли е катса юлмалли йĕркене, çавăн пекех тата, чăннипе мĕн чухлĕ тырпул пухса кĕртнине кура, тырпул тухăçлăхне ӳстермелли планлă задание пурнăçланăшăн гарантиллĕ минимум тăрăх натурăпа тӳлемелли йĕркене, килес çул тырпул акса тума хатĕрленсе кăçал тунă ĕçсемшĕн тата ытти ĕçсемшĕн — ĕçсене срокра тунине кура тӳлемелли йĕркене улăштармасăрах хăварас.

3. 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа трактор бригадисенчи рабочисене ĕçленĕшĕн укçан тӳлемелле тăвас. Машина-трактор тата специализациленĕ станцисем трактор бригадисенчи рабочисене, территориллĕ зонăна кура, кашни ĕçкунĕшĕн çакăн чухлĕ тӳлеççĕ:

	Территориллĕ зонăсенче ĕçкунĕшĕн тӳлеççĕ I	II	III	IV
Трактористсене, трактор бригадисен бригадирĕсене тата вĕсен помощникĕсене	5 тенкĕ	6 тенкĕ	7 тенкĕ	8 тенкĕ
Учетчик-заправщиксене	3 тенкĕ	3 тенкĕ	3 тенкĕ	4 тенкĕ
Комбайнер помощникĕсене	4 тенкĕ	4 тенкĕ	4 тенкĕ	6 тенкĕ
Прицепщиксене	2 тенкĕ те 50 пус	2 тенкĕ те 50 пус	2 тенкĕ те 50 пус	2 тенкĕ те 50 пус

4. 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа трактор бригадисенчи яланхи рабочисене ремонт мастерскойĕсенче ĕçленĕшĕн, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилес тĕлĕшпе ĕçленĕшĕн, çавăн пекех тата МТС-сенчи строительство ĕçĕсемпе ытти ĕçсене тунăшăн машина-трактор тата специализациленĕ станцисем СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви çирĕплетнĕ сдельнăй расценкăсемпе ставкăсем тăрăх тӳлеççĕ, анчах çакăнтан сахал тӳлени пулмалла мар:

	Сдельнăй ĕçлесе нормăна тултарнăшăн	Сехет тăрăх 8 сехет ĕçленĕшĕн
Трактор бригадисен бригадирĕсене	20 тенкĕ	18 тенкĕ
Трактор бригадисен бригадирĕсен помощникĕсене, 1-мĕш класлă трактористсене, экскаватор машинисчĕсене, комбайнерсене, механик-комбайнерсене, çĕр мамăкĕ пухса кĕртмелли машинăсен механик-водителĕсене	18 тенкĕ	15 тенкĕ
2-мĕш класлă трактористсене, машинистсен помощникĕсене, йĕтĕн тата кантăр пухса кĕртмелли машинăсен тата йĕтĕн тылламалли машинăсен машинисчĕсене	15 тенкĕ	13 тенкĕ
Учетчик-заправщиксене	13 тенкĕ	10 тенкĕ

5. Çакăн пек йĕрке тăвас: трактор бригадисенчи рабочисене ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрăх илмелли апат-çимĕçе каякан тĕштырра — гарантиллĕ минимум чухлĕ, çавăн пекех тата комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе тырпул пухса кĕртнĕшĕн илмелли тырра машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисем параççĕ. Пĕрремĕш çур çулта ĕçленĕшĕн илмелли тырра октябрĕн 1-мĕшĕччен, иккĕмĕш çур çулта ĕçлесе илнĕ тырра—çак çулталăк вĕçлениччен парса татмалла.

Трактор бригадисенчи рабочисене памалли апат-çимĕçе каякан тĕштырра машина-трактор тата специализациленĕ станцисем хатĕрлев организацийĕсенчен илеççĕ. Трактор бригадисенчи рабочисене, вĕсем хăйсем килĕшсен, машина-трактор тата специализациленĕ станцисем тырă вырăнне укçа пама пултараççĕ, ун пек чухне укçа мĕн чухлĕ памаллине государствăн тырă сутăн илмелли хакĕсемпе шутламалла.

6. Çакăн пек йĕрке тăвас: колхозсем натуроплата тыррине панă вăхăтрах хатĕрлев органĕсене трактор бригадисенчи рабочисене ĕçлесе тунă ĕçкунĕсемшĕн гарантиллĕ минимум чухлĕ пама, çавăн пекех тата комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе тырпул пухса кĕртнĕ чухне ĕçленĕшĕн пама апат-çимĕçе каякан культурăсем параççĕ.

Апат-çимĕçе каякан тĕштырă культурисем акман е апат-çимĕçе каякан тĕштырă культурисем сахал акакан колхозсем трактор бригадисенчи рабочисене ĕçкунĕсем тăрăх гарантиллĕ минимум чухлĕ тӳлеме, хатĕрлев пунктĕсене тырă парас вырăнне, машина-трактор тата специализациленĕ станцисен счечĕ çине укçа куçарма пултараççĕ, укçине çав тырă государствăн сутăн илмелли хакĕсем тăрăх мĕн чухлĕ тăнине шутласа куçармалла.

Колхозра ĕçкунĕсем тăрăх паракан тырă гарантиллĕ минимумран ытларах пулсан, вара колхоз трактор бригадисенчи яланхи тата сезонлă рабочисене гарантиллĕ минимум çумне колхозра ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçнĕ чухнехи хисепе çитерсе хушса парать. Ĕçкунĕсем тăрăх валеçнĕ ытти продуктсене колхоз трактор бригадисенчи яланхи тата сезонлă рабочисене мĕнпур колхозниксемпе пĕр пекех парать. Укçа тупăшĕсене валеçнĕ чухне колхозсем трактор бригадисенчи яланхи тата сезонлă рабочисене вĕсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем çине ытти колхозниксемпе пĕртанах укçа памалăх машина-трактор тата специализациленĕ станцисене укçа куçарса параççĕ.

7. Çакăн пек йĕрке тăвас: уй-хир ĕçĕсене тунă вăхăтра колхозсен, МТС-семпе тунă договорсем тăрăх, трактор бригадисенчи рабочисене тӳлевсĕрех общежити памалла, çавăн пекех тата, колхоз правленийĕ МТС е специализациленĕ станци директорĕпе килĕштернĕ хакпа, апат çитермелле. Трактор бригадисенчи рабочисене апат çитерме панă çăкăр вырăнне вĕсем тунă ĕçсемшĕн расчет тунă чухне тырă тытса юлмалла.

8. Республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсене тата облисполкомсене машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисенчи трактористсене тата трактор бригадисенчи ытти яланхи рабочисене, вĕсен колхозсенче кил вырăн участокĕ çук пулсан, çавăн пекех тата МТС-сем вырнаçнă çĕре колхозсенчен куçса пынисене, кил вырăн участокĕ 0,25 гектар таран уйăрса пама хушас, çак шута çуртсем лартнă вырăн та кĕрет.

Машина-трактор тата специализациленĕ станцисен трактор бригадисенчи рабочисене кил вырăн участокĕсем государство фондĕнчи çĕртен, хуласемпе халăх пурăнакан ытти пунктсен, совхозсен çĕрĕнчен, çавăн пекех тата, колхозсемпе килĕшсе, колхозсенчи кил вырăнĕсене ахаль выртаканнисене уйăрса памалла.

Машина-трактор станцийĕсенче тата специализациленĕ станцисенче яланах ĕçлеме илнĕ трактористсем, трактор бригадисенчи ытти рабочисем те, хăйсем килĕшсен, хăйсем пурăннă колхозсенче кил вырăн участокне хăйсем усă курма хăварма пултараççĕ.

9. Çакăн пек йĕрке тăвас: машина-трактор тата специализациленĕ станцисенчи яланхи тата сезонлă рабочисене государствăн социальнăй страховани енĕпе пособисемпе пенсисем вĕсем машина-трактор тата специализациленĕ станцисенчен илнĕ пĕтĕм укçапа натурăллă тӳлевсене шута илсе памалла тăваççĕ тата парса тăраççĕ. Ун чухне тырă хакне государствăн сутăн илмелли хакĕсем тăрăх шутлаççĕ.

Пособисем тата пенсисем мĕн чухлĕ тӳлемеллине палăртнă чухне çак Постановлени тухиччен МТС-сенче, специализациленĕ станцисенче, çавăн пекех государствăн тата ытти предприятийĕсемпе организацийĕсенче ĕçленĕ пĕтĕм стажа шута илеççĕ.

Машина-трактор тата специализациленĕ станцисен социальнăй страховани тӳлевĕсене пособисемпе пенсисем тӳленĕ чухне шута илекен мĕнпур йышши ĕç укçинчен, кăтартса панă тариф тăрăх, тӳлесе тăмалла.

10. Трактор бригадисенчи рабочисене вăтам ĕç укçи тата выходной пособи мĕн чухлĕ тӳлемеллине государство предприятийĕсенчи рабочисене валли шутласа панă йĕркепех шутласа кăлараççĕ, укçан тата натурăпа илнине, пособисемпе пенсисем тӳленĕ чухне вăтам ĕç укçи шутне кĕртекеннисене, пĕтĕмпех шута илеççĕ.

II.

Машина-трактор станцийĕсене ертсе пыракан тата инженерла-техникла кадрсемпе çирĕплетесси çинчен

11. Машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисене ертсе пыракан тата инженерла-техникла кадрсемпе çирĕплетес ĕç СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, вырăнти парти, совет тата ялхуçалăх органĕсен чи пысăк задачи пулать, тесе шутлас, ку ĕçе тунă чухне МТС директорĕсем пулма инженер-механиксене, çавăн пекех тата аслă шкултан вĕренсе тухнă тата ялхуçалăхне механизацилес тĕлĕшпе ĕçлеме кирлĕ чухлĕ хатĕрленнĕ агрономсене уйăрса лартмаллине асра тытмалла. МТС-сен главнăй инженерĕсем, главнăй агрономĕсем тата главнăй зоотехникĕсем пулма аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсене çеç уйăрса лартмалла.

Специальнăй пĕлӳ илмен, анчах хăйсен ĕçне практикăра вĕренсе çитнĕ тата машина-трактор станцийĕсене ăста ертсе пыракан МТС директорĕсене, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви ирĕк панипе, хăйсен вырăнĕнчех хăвармалла, вĕсене хăйсен квалификацине ӳстерме пулăшмалла.

12. Союзлă республикăсенчи коммунистсен партийĕсен Центральнăй Комитечĕсене, КПСС крайкомĕсемпе обкомĕсене промышленноçри тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчи инженер-механиксене суйласа илсе, вĕсене 1953 çулта машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисенче директорсем, главнăй инженерсем тата ремонт мастерскойĕсен заведующийĕсем пулса ĕçлеме яма хушас.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, союзлă республикăсенчи коммунистсен партийĕсен Центральнăй Комитечĕсемпе, КПСС крайкомĕсемпе тата обкомĕсемпе килĕштерсе, машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисенче ĕçлеме промышленность аталаннă облаçсенчен, крайсенчен тата республикăсенчен инженерсемпе техниксене урăх облаçсене, крайсене, республикăсене — инженерла-техникла кадрсем сахалтарах çĕре ярасси çинчен сĕнӳсем хатĕрлемелле, çав сĕнӳсене СССР Министрĕсен Совечне çирĕплетме тăратмалла.

Çакăн пек йĕрке тăвас: вырăнти партипе совет органĕсем МТС-сене яракан инженерсемпе техниксене тивĕçлĕ министерствăсемпе ведомствăсен тытса тăмалла мар, вĕсене пĕр чăрмавсăрах ĕçрен ямалла.

13. СССР Культура министерствине çапла тума хушас:

а) 1954—1955 çулсенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине МТС-сенче ĕçлеме 6500 инженер-механик памалла, çав шутран 1954 çулта ялхуçалăх механизацийĕн институчĕсенчен тата ытти техникăлла аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăк специалистсене 2500 инженер памалла;

б) ялхуçалăх механизацийĕпе электрификаци институчĕсенче тата факультечĕсенче вĕренме илекен студентсен йышне ӳстермелле, 1955 çултан пуçласа çав институтсемпе факультетсене кашни çул 7500 çын вĕренме илмелле;

в) ялхуçалăх механизацийĕпе электрификаци институчĕсемпе факультечĕсен вĕрентӳпе производство базисене пысăклатасси çинчен пĕр уйăх срокра СССР Министрĕсен Совечне сĕнӳсем тăратмалла.

14. Машина-трактор станцийĕсенче ĕçлекен специалистсен квалификацине ӳстерес шутпа СССР Культура министерствине, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствипе килĕштерсе, çапла тума хушас:

а) 1953 çулта ялхуçалăх механизацийĕпе электрификаци институчĕсем çумĕнче МТС-сен ертсе пыракан работникĕсемпе специалисчĕсен пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен икĕ институт тата ялхуçалăх институчĕсенче МТС-сен ертсе пыракан работникĕсемпе специалисчĕсен квалификацине ӳстермелли яланлăх курссем организацилемелле, вĕсенче çулталăкра пĕтĕмпе 1000 çын вĕрентмелле, пĕлӳсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтсенче 6 уйăх, квалификацие ӳстермели курссенче 3 уйăх вĕрентмелле.

МТС-сен ертсе пыракан работникĕсен пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институтсенче тата квалификацие ӳстерекен курссенче вĕренме кĕрекенсене 1953 çулта ялхуçалăх специалисчĕсен квалификацине ӳстермелли курссене пĕтĕмпе миçе çын илме палăртнă хисеп чухлĕ вĕренме илмелле;

б) специальнăй вăтам пĕлӳ илнĕ тата темиçе çул хушши машина-трактор станцийĕнче лайăх ĕçленипе палăрнă МТС директорĕсемпе главнăй инженерĕсене хăйсен квалификацине ӳстерме пулăшма 1953 çулта Мускаври В. М. Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх механизацийĕпе электрификаци институчĕ, Харьковри, Саратоври, Мелитопольри ялхуçалăх механизацийĕн институчĕсем çумĕнче, Ташкентри ялхуçалăх ирригацийĕпе механизацийĕн институчĕ, Воронежри ялхуçалăх институчĕ çумĕнче ятарласа ялхуçалăхĕн инженер-механикĕсене хатĕрлемелли факультетсем организацилемелле, вĕсенче икшер çул вĕрентмелле, кашни çул 700 çын вĕренме илмелле;

в) агрономие тата экономикăна вĕренмелли аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă МТС директорĕсен ялхуçалăхне механизацилес ĕçри пĕлĕвĕсене ӳстерме 1953 çулта яланлăх ултă уйăхлăх курссем организацилемелле, çав курссенче вĕренме кашни çул 500 çын илмелле.

15. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине 1953 çулта ялхуçалăх механизацийĕ техникумĕсем çумĕнче ятарласа МТС-сенчи механик-практиксен квалификацине ӳстермелли уйрăмсем организацилеме хушас, çав уйрăмсенче 2 çул вĕрентмелле, вĕсенче вĕренме кашни çул 1000 çын илмелле.

Çакăн пек йĕрке тăвас: маларах асăннă 2 çул вĕренмелли уйрăмсене республикăри ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви, крайри тата облаçри ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ командировка панипе МТС-сенчи механик-практиксене, 7 çултан кая мар вĕреннисене илмелле. Техникумсен 2 çул вĕренмелли уйрăмĕсенчен вĕренсе тухнă, унтан вĕренсе тухмалли экзаменсем панă механиксене вĕсем техник-механик ятне илни çинчен диплом параççĕ.

16. Промышленноçран тата ытти предприятисемпе организацисенчен машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисене ĕçлеме куçарнă специалистсемшĕн çакăн пек йĕрке тăвас: вĕсем 55 çула çитсен, пĕтĕмпе 25 çул ĕçленĕ пулсан, машина-трактор станцийĕнче 5 çултан кая мар ĕçленĕ пулсан, вĕсене СССР Министрĕсен Совечĕн 1951 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнчи 3688-мĕш №-лĕ Постановленийĕнче каланă пек пенси памалла.

17. Машина-трактор станцийĕ кирек ăçта пулсан та, МТС директорĕсемпе вĕсен заместителĕсене СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1944 çулхи январĕн 9-мĕшĕнчи 30-мĕш №-лĕ Постановленийĕн 5-мĕш пунктĕнче каланă йĕркепе вĕсене тӳлевсĕрех хваттер, вутăпа ытти топливо тата хваттере çутатмалли памалла, çавăн пекех тата МТС рабочийĕсене, служащийĕсене тата специалисчĕсене топливо пама планра палăртса, çав топливăна укçалла памалла.

18. Машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисенче ĕçлеме халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчен тата СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин системинчен куçарнă, директорсем, главнăй инженерсем тата ремонт мастерскойĕсен заведующийĕсем пулма уйăрса лартнă специалистсен малтанхи должноçри ĕç укçи вĕсене машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисенче уйăрса лартакан должноçсем тăрăх тӳлемелли ĕç укçинчен пысăкрах пулнă пулсан, вĕсене халĕ уйăрса лартнă вырăнта ĕçленĕ вăхăтра малтанхи должноçри чухлĕ ĕç укçи памалла.

19. Халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчен тата СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин системинчен машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисене яракан инженерсемпе техниксене пĕр вăхăтлăха 3 уйăхри ĕç укçи чухлĕ пособи памалла, малтан ĕçленĕ çĕртен çĕнĕ ĕçе куçма тухакан расходсене Ĕç çинчен калакан законсен кодексĕн 82-мĕш статьи тăрăх тӳлемелле.

III.

Ялхуçалăхĕ валли механизаторсен кадрĕсем хатĕрлесси çинчен

20. Механизаторсен квалификациллĕ кадрĕсене хатĕрлес ĕçе малалла лайăхлатас тĕллевпе, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, СССР Совхозсен министерствине, СССР Культура министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа механизаци шкулĕсенчен çак кадрсене хатĕрлевен ялхуçалăх механизаци училищисем организацилеме хушас:

а) дизеллĕ тракторсем, комбайнсем тата кăткăс ялхуçалăх машинисем çинче ĕçлеме слесарь квалификацине илнĕ нумай ĕçсене тума пĕлекен тракторист-машинистсем—вĕренмелли срок пĕр çул;

б) гусеничнăй тата урапаллă тракторсем, ялхуçалăх машинисем çинче ĕçлеме слесарь квалификацине илнĕ трактористсем—вĕренмелли срок 6 уйăх;

в) самоходнăй тата тракторпа ĕçлекен комбайнсем çинче ĕçлеме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри нумай ĕç вăйĕ ыйтакан ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе слесарно-монтажнăй ĕçсем тума механик-комбайнерсем—вĕренмелли срок 6 уйăх;

г) трактор бригадисен бригадирĕсене тата бригадирсен помощникĕсене слесарь тата тимĕрçĕ квалификацине илме тепĕр хут вĕрентсе хатĕрлеме—вĕренмелли срок пĕр çул.

21. СССР Культура министерствине СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, СССР Совхозсен министерствине республикăсен Министрĕсен Совечĕсене крайисполкомсемпе облисполкомсене 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен СССР Культура министерствин ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсен никĕсĕ çинче ялхуçалăхне механизацилес тĕлĕшпе ĕçлекен 250 ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсем организацилеме тата 1954—1957 çулсенче кашниче 240—270 çын вĕренмелĕх çĕнĕ ялхуçалăх механизаци училищисем туса хума, çавăн пекех хальхи ялхуçалăх механизаци училищисем валли 200 вĕрентӳ корпусĕ, практикăлла занятисем ирттерме 300 корпус тата 600 общежити туса лартма хушас.

(Малалли 2-мĕш страницăра).

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитетĕнче

Машина-трактор станцийĕсен ĕçне малалла лайăхлатмалли мерăсем çинчен

(Малалли).

СССР Госпланĕн укçа-тенкĕ уйăрса памалли çулталăкри плансенче çĕнĕ çуртсем тума, киввисене юсама тата çĕнетме, çавăн пекех çĕнĕрен организациленекен училищисем валли вĕрентÿ оборудованийĕ тата хуçалăх инвентарĕ туянма кирлĕ укçа-тенкĕ уйăрса пама пăхса хумалла.

22. СССР Культура министерствине, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствипе тата СССР Совхозсен министерствипе пĕрле, СССР Министрĕсен Советне ремесла училищисене, ялхуçалăх механизаци ФЗО шкулĕсене тата ялхуçалăх механизаци училищисене ертсе пырас ĕçе организацилесси çинчен сĕнÿсем тăратма хушас.

23. Çакăн пек йĕрке тăвас: тракторист-машинистсен, механик-комбайнерсен тата трактористсен ялхуçалăх механизаци училищисемпе ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă хыççăн машина-трактор станцийĕсемпе совхозсенче икĕ çулталăкран кая мар ĕçлемелле тата çак вăхăт хушшинче призыва кĕме çул çитнĕ çамрăксене çар службине илессинчен хăтармалла.

24. СССР Госпланне министерствăсемпе ведомствăсен ремесла училищисемпе шкулĕсенчен вĕренсе тухакан çамрăк рабочисене ĕçе ямалли плансенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата СССР Совхозсен министерствин предприятийĕсемпе стройкăсенчи ĕçлеме кирлĕ чухлĕ слесарьсем, токарьсем, тимĕрçĕсем, çавăн пекех строительство рабочийĕсем уйăрса пама пăхса хума хушас.

25. Ялхуçалăх механизаци училищисем валли училищĕсенче вĕренекенсене тумтир, атă-пушмак, кĕпе-йĕм, выртса тăмалли вырăн хатĕрсем парса тăрас йĕрке тата норма ремесла училищисенче вĕренекенсене парса тăракан йĕрке тата норма пек пулмалла.

Ялхуçалăх механизаци училищисенче вĕренекенсене Правительство СССР Культура министерствин специальнăй ремесла училищисенче вĕренекенсем валли туса панă норма тăрăх апат çитермелле.

26. СССР Финанс министерствине 1954—1955 çулсенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви валли çĕнĕрен хушса, нормативсенчен иртерсе, ялхуçалăх механизаци училищисен çурчĕсене тĕпрен юсама 70 миллион тенкĕ, вăл шутран 1954 çулта 40 миллион тенкĕ укçа уйăрса пама пăхса хума хушас.

27. Ялхуçалăх механизаци училищисенче СССР Культура министерствин ĕç резервĕсен системинчи училищесемпе шкулсем валли туса хунă типовой штатсем тата çак училищесенче ĕçлекен работниксем валли асăннă училищесемпе шкулсенче ĕçлекен работниксем валли туса хунă должность оклачĕсем, çăмăллăхсем тата преми памалли йĕркесем пулмалла.

IV.

МТС-сенчи строительство çинчен тата ремонт базине çирĕплетесси çинчен

28. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене 1953—1956 çулсенче кашни машина-трактор станцийĕ çумĕнче тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене, çĕр чавакан машинăсене тата специальнăй машинăсене, çавнашкалах МТС-семпе колхозсен автомобилĕсене юсама ремонт тăвакан базăн специализациленĕ станцийĕсене тума хушас.

Кашни машина-трактор станцийĕнче тата специализациленĕ станцинче, пуринче те пекех, ремонт тăвакан типлă мастерской, тракторсем лартма икĕ-виçĕ гараж, комбайнсем лартма икĕ-виçĕ сарай, ялхуçалăх машинисем лартма кирлĕ таран лупасайсем тата бетонланă усă площадкăсем, нефтебаза, автогараж, запаслă пайсене хумалли склад, контора, мунча, рабочисем валли общежити, çителĕклĕ таран пурăнмалли çуртсем, шыв парса тăни, чи çăмăл канализаци пулмалла, тесе шутлас.

Çакăн пек йĕрке тăвас: 1954 çултан пуçласа çĕнĕрен организацилекен МТС-сене çав МТС-сем валли типовой проектсем тăрăх производство çурчĕсемпе ытти çуртсем туса пĕтерсен тин тракторсем, машинăсем тата оборудовани памалла тата ĕçе кĕртмелле.

29. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене çапла тума хушас:

а) 1953 çулта, халăх хуçалăх планĕнче палăртса панă тăрăх, 673 мастерской, 1130 сарай тата лупасай, 81200 тăваткал метр пурăнмалли çуртсем туса çитерсе ĕçе ямалла, кунсăр пуçне МТС-сенче 500 çĕнĕ мастерской тума тытăнмалла.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине 1953 çулта çĕнĕ мастерскойсем тума тытăнас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туса иртерме татах 75 миллион тенкĕ расходлама ирĕк парас;

б) 1954—1956 çулсенче машина-трактор станцийĕсенче 4200 ремонт мастерскойĕ, тракторсем лартма 8400 гараж, комбайнсем лартма 8400 сарай, ялхуçалăх машинисем лартма 15000 лупасай тата 15000 бетонланă усă площадка, 2880 нефтебаза, 3600 автогараж, запаслă пайсене хума 3600 склад, 10800 пурăнмалли çурт, 3000 общежити туса çитерсе ĕçе ямалла, çавнашкалах шыв илсе пымалла, чи çăмăл канализаци тата МТС-сенчи ытти сооруженисемпе объектсене тумалла.

30. Машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисенчи ремонт мастерскойĕсен оборудовани табельне çирĕплетес.

31. СССР Госпланне тата СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине МТС-сенче, палăртнă плансем тăрăх, производство çурчĕсемпе ытти объектсене тума, çавнашкалах тепĕр çул тумалли ремонт мастерскойĕсен никĕсне хывма халăх хуçалăх планĕсенче çулсеренех укçа-тенкĕ тата материалсем уйăрса пама палăртса хума хушас.

32. СССР Госпланне халăх хуçалăх планĕсенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине машина-трактор станцийĕсенче ремонт мастерскойĕсем, гаражсем, сарайсем, лупасайсем, нефтебазăсем, пурăнмалли çуртсем, общежитисем тата ытти çуртсемпе сооруженисем тумашкăн 1954 çулта—3256 миллион тенкĕ, 1955 çулта—3504 миллион тенкĕ, 1956 çулта—3752 миллион тенкĕ уйăрса пама палăртса хума хушас.

33. Машина-трактор станцийĕсене ремонт тăвакан базăсем организацилеме пулăшас тесе, строительствăпа промышленность министерствисене тата ведомствăсене МТС-сенче 2000 ремонт мастерскойĕ, тракторсем валли 4000 гараж, комбайнсем валли 4000 сарай, 4000 пурăнмалли çурт, 2000 общежити тата ытти объектсем тума хушас.

СССР Госпланне министерствăсемпе ведомствăсен подряд ĕçĕсен планне кашни çулах машина-трактор станцийĕсем валли çакăнта кăтартнă объектсене тăвас ĕçе кĕртме хушас, вăл шутра 1954 çулта 600 ремонт мастерскойĕ, тракторсем валли 1200 гараж, комбайнсем валли 1200 сарай, 1200 пурăнмалли çурт, 600 общежити тума палăртмалла, 1955 тата 1956 çулсенче кашни çулах 700 ремонт мастерскойĕ, тракторсем валли 1400 гараж, комбайнсем валли 1400 сарай, 1400 пурăнмалли çурт, 700 общежити тата ытти объектсем тума палăртмалла.

Министерствăсемпе ведомствăсен строительствăпа монтаж организацийĕсенчи рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене, строительство ĕçĕнче ĕçлеме МТС-сене куçарсан та, вĕсене малтан ĕçленĕ стройкăсенче Правительство постановленийĕсем тăрăх ĕçшĕн тÿлемелли условисем, хушса тÿлемелли коэффициентсем, ĕç нормисемпе ĕç хакĕсем тĕлĕшпе тата ытти енĕпе парса тăнă льготăсемпе çăмăллăхсене 1954—1955 çулсенче çавăн пекех парса тăмалла тăвас.

34. Транспортпа йывăр машиностроени министерствине уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне хытă топливо (вутă, çĕр кăмрăкĕ, торф) çунтарса пăспа ĕçлекен 100 лаша вăйлĕ установкăсем туса кăларас ĕçе организацилесси çинчен сĕнÿсем тăратма хушас, çав установкăсен комплектĕнче электрогенераторсем тата валеçекен щитсем пулмалла; сĕнÿсем тăратнă чухне машина-трактор станцийĕсем валли çавăн пек установкăсем 1954 çулта 1000 установка, 1955 çулта—3000 установка туса пама кирлине шута илмелле.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине МТС электростанцийĕсенче, МТС мастерскойĕсене пăспа ĕçлекен установкăсем çителĕклĕ туса париччен, çавнашкалах чугун çултан инçе МТС-сенче те, вырăнта топливо çук пулсан, 100 лаша вăйлĕ дизельсемпе усă курма ирĕк парас.

35. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине облисполкомсем, крайисполкомсем тата республикăсен Министрĕсен Совечĕсем çирĕплетнĕ хакпа вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕ туса кăларакан кирпĕчпе извеçе илме, çак строительство материалĕсен хакне МТС-сенчи строительствăн сметăпа финанс расчечĕсене кĕртме, çавнашкалах вăрмансăр районсенче ремонт мастерскойĕсемпе гаражсем тунă çĕрте пухса хатĕрленĕ тимĕр-бетонпа усă курма ирĕк парас.

36. СССР Госпланне, СССР Финанс министерствине, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене машина-трактор станцийĕсенчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем харпăр хăй валли пурăнмалли çуртсем тăвас ĕçе анлăн сарса яма хушас.

СССР Госпланне, СССР Финанс министерствине тата СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине çапла тума хушас:

а) 1954—1956 çулсенче харпăр хăйне валли пурăнмалли çуртсем тăвакансене пама кашни çулах 450 миллион тенкĕ кредит уйăрса памалла, МТС-сенче ĕçлекен рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене 10 çуллăха 12 пин тенкĕ таран ссуда памалла, ссудăна илнĕ хыççăн виççĕмĕш çулĕнчен пуçласа тавăрса пама тытăнмалла;

б) республикăсен Министрĕсен Совечĕсен, крайисполкомсемпе облисполкомсен халăх хуçалăх планĕсенче МТС работникĕсене харпăр хăйне валли пурăнмалли çуртсем тума пулăшмашкăн строительство материалĕсем уйăрса памалла.

Республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене харпăр хăйне валли пурăнмалли çуртсем тăвакансене строительство материалĕсем туртарса парса, столяр тăвакан япаласемпе тимĕр-тăмăртан тăвакан япаласене промышленность предприятийĕсенче туса хатĕрлесе пулăшма, çавнашкалах вырăнта туса кăларакан кирпĕчпе извеçе тата фонда кĕртмен ытти материалсене сутма хушас.

37. СССР Вăрманпа хут промышленность министерствине тата СССР Строительство материалĕсен промышленность министерствине 1954—1956 çулсенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата МТС-семпе строительство ĕçне хутшăнтаракан министерствăсемпе ведомствăсене МТС-сем валли ремонт мастерскойĕсем, гаражсемпе сарайсем тума йывăç фермăсен пайĕсем, чÿречепе алăк янахĕсем, хапха хăмисем хатĕрлесе пама, çавнашкалах икĕ хваттерлĕ тата пĕр хваттерлĕ пухса лартмалли йывăç çуртсем туса пама хушас.

38. СССР Строительство материалĕсен промышленность министерствипе Машиностроени министерствине СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви панă заявкăсем тăрăх МТС-сенче мастерскойсем, пурăнмалли çуртсемпе общежитисем тума санитарипе техникăлла оборудовани, пăспа шыв арматури, фитингсем, тимĕр-тăмăртан тăвакан япаласем, вентиляторсем, дефлекторсем хатĕрлесе пама хушас.

39. СССР Госпланне 1954—1956 çулсенчи плансенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине строительствăлла монтаж конторисенче, трестсенче тата МТС-сенче ĕçлеме 480 инженер-строитель, 6000 техник-строитель уйăрса пама палăртма хушас, вăл шутра: 1954 çулта—200 инженер тата 1500 техник, 1955 çулта—280 инженер тата 2000 техник, 1956 çулта—2500 техник уйăрса памалла.

40. Машина-трактор станцийĕсене мастерскойсене, гаражсене, сарайсене юсама пулăшас тесе:

а) СССР Госпланне 1954 çулта СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине МТС-сенчи çуртсемпе сооруженисене юсама 7000 пин плитка шифер, 720 пин тăваткал метр çемçе çивитти, 220 пин кубометр çурман йывăç тата 100 пин тăваткал метр чÿрече кантăкĕ уйăрса пама палăртма хушас;

б) Ялхуçалăх банкне çуртсене, сооруженисене тата оборудование капитальнăй ремонт тумалли кварталти заданисене иртерсе тултаракан машина-трактор станцийĕсене, укçа-тенкĕ памалли çулталăкри план тăрăх, квартала пама палăртнă хисепрен иртсе укçа-тенкĕ пама хушас;

в) СССР Финанс министерствине 1954 çултан пуçласа союзлă бюджет тăрăх машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисен çурчĕсене, сооруженийĕсене тата оборудованине капитальнăй ремонт тума СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине çав çуртсен, сооруженисен оборудованин баланс хакĕн 4,5 процентĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса пама палăртма хушас, 1953 çулта [illegible] çав ĕçсене тума çирĕплетнĕ бюджет тăрăх 200 миллион тенкĕ çĕнĕрен хушса памалла.

41. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, крайисполкомсемпе облисполкомсене çапла тума хушас:

а) ремонт завочĕсен тата районсенчи капитальнăй ремонт тăвакан мастерскойĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла. Ремонт предприятийĕсенчи производство хăвачĕсемпе пĕтĕмĕшпех усă курса, ĕçе малта пыракан меслетсемпе организацилесе тата çĕнĕ предприятисене ĕçе ярса, трактор, комбайн двигателĕсемпе ытти двигательсене, çавнашкалах автомобильсене, металл касмалли станоксене юсас ĕçе нумай ÿстермелле;

б) 1954—1956 çулсенче ремонт тăвакан 9 завод тата районсенчи капитальнăй ремонт тăвакан 6 мастерской тумалла, тума пуçланă ремонт завочĕсене—36 завода тата районсенчи капитальнăй ремонт тăвакан 15 мастерскоя 1954—1955 çулсенче туса çитерсе ĕçе ямалла;

в) дизеллĕ тракторсен, автомобильсен двигателĕсене тата станок оборудованине юсас ĕçе ÿстерме 1954—1955 çулсенче ремонт тăвакан 41 завода тата районсенчи капитальнăй ремонт тăвакан 125 мастерскоя пысăклатса çĕнетмелле.

42. СССР Госпланне халăх хуçалăхĕн планĕсенче ремонт предприятийĕсем çĕнĕрен тума тата хальхи предприятисене çĕнетме 1954 çулта 350 миллион тенкĕ, 1955 çулта—500 миллион тенкĕ, çавнашкалах оборудованипе материалсен фондне палăртса хума хушас.

43. 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин ремонт предприятийĕсене пурне те союзлă бюджетран укçа-тенкĕ парса тăма тытăнас.

Союзлă бюджетран укçа-тенкĕ илсе тăма тытăнакан ремонт предприятийĕсен хăйсен оборотри укçи-тенки çителĕксĕр пулсан, союзлă республикăсен Министрĕсен Совечĕсен вĕсен оборотри укçи-тенкине 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çирĕплетнĕ норматива çитермелле.

СССР Финанс министерствин бюджета пурнăçлас йĕркепе СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин 1953 çулхи тупăшĕсемпе расхочĕсен балансĕнче тата союзлă республикăсен бюджечĕсенче тивĕçлĕ улшăнусем тумалла.

44. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине 1954—1955 çулсенче ремонт предприятийĕсен çурчĕсемпе сооруженийĕсен амортизаци укçи-тенкипе çак предприятисен производство çурчĕсемпе служба çурчĕсене капитальнăй ремонт тăвас ĕçре усă курма ирĕк парас.

V.

Машина-трактор паркĕпе усă курассине лайăхлатасси çинчен

45. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене МТС-сенчи машина-трактор паркĕпе усă курассине, трактор бригадисенче ĕçе организацилессине чылай лайăхлатма; мĕнпур трактористсем, комбайнерсем тата машинистсем сменăри ĕç нормине тултармалла тума, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине тĕрĕс организацилеме, простойсем пулмалла мар тума хушас.

46. Трактор бригадисенче ĕçлекен работниксем валли кирлĕ пек производство тата йăла условийĕсем туса хурас тĕллевпе МТС-сенче пуринче те кашни трактор бригади валли яланлăха уй-хир станĕсем туса лартмалла. Çакна май:

а) колхозсене 1953 çул вĕçлениччен трактор бригадисем валли уй-хир станĕсем организацилеме, пусă çаврăнăшне шута илсе, яланлăха çĕр участокĕсем уйăрса пама сĕнес; трактор бригадисемпе уй-хир бригадисен станĕсене май килнĕ таран пĕр участок çинче вырнаçтарма пăхса хумалла;

б) МТС директорĕсене 1954 çулхи уй-хир ĕçĕсем пуçланиччен трактор бригадисен вăйĕпе уй-хир станĕсем тавра карта тытса çаврăнма, машинăсене тăратма тата нефтехранилище валли площадкăсем тума хушас;

в) республикăсен Министрĕсен Совечĕсене тата СССР Госпланне 1954 тата 1955 çулсенчи халăх хуçалăх планĕсенче союзлă тата вырăнти промышленность предприятийĕсенче 80 пин уй-хир вагонĕсем туса кăларас ĕçе организацилессине тата вĕсене МТС-сене парассине пăхса хума хушас; çак вагонсене трактор бригадисенче ĕçлекен рабочисене пурăнма ирĕклĕ туса йĕркелемелле. Уй-хир вагонĕсене МТС-сене строительство валли уйăрса панă укçапа тÿлесе илмелле;

г) колхозсене 1954—1955 çулсенче трактор бригадисен уй-хир станĕсенче общежитисем, машинăсене усрама тата вĕсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăма лупасайсем, уй-хир кухнисем, горючисемпе сĕрмелли çусем усрама яланлăха хранилищесем туса лартма сĕнес.

47. Трактор бригадисене техника енĕпе пулăшса тăрассине лайăхлатас тĕллевпе СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине уй-хир ĕçĕсем пынă вăхăтра тракторсемпе ялхуçалăх машинисене техника енĕпе пăхмалли кăткăс ĕçсене тата вĕсене юсассине куçса çÿрекен автомастерскойсен вăйĕпе туса иртерме хушас, автомастерскойсенче юсав енĕпе ĕçлекен ятарласа уйăрнă рабочисен бригадисем пулмалла. Çак рабочисем МТС-сен яланхи работникĕсем пулса тăраççĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кашни сменăра пăхса тухасси тата пысăках мар юсав ĕçĕсем туса иртерессии трактористсен обязанноçĕ пулса тăмалла.

48. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине 1954—1955 çулсенче хăйĕн завочĕсенче, трактор бригадисене техника енĕпе пулăшса тăма кирлĕ 18000 куçса çÿрекен автомастерскойсем туса хатĕрлеме хушас, вăл шутран: 1954 çулта—8000, 1955 çулта—10000 куçса çÿрекен автомастерской тумалла.

49. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене 1954 çултан пуçласа МТС-сенче пуринче те радиостанципе тата телефон сыхăнăвĕпе усă курса диспетчер служби организацилеме хушас.

СССР Госпланĕн 1954—1955 çулсенчи халăх хуçалăх планĕсенче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви валли 45000 «Урожай» радиостанцисем туса хатĕрлесе парас ĕçе пăхса хумалла, вăл шутран 20000 радиостанци 1954 çулта туса хатĕрлесе памалла; çавăн пекех радиостанцисене йĕркеллĕ ĕçлесе тăма кирлĕ таран аккумуляторсем, контрольно-измерительнăй аппаратура, запаслă пайсем тата ытти оборудовани уйăрса парассине пăхса хумалла.

50. Машина-трактор паркне ялхуçалăх ĕçĕсем пынă вăхăтра ялан йĕркеллĕ тата ĕçлеме юрăхлă тытса тăмалла тăвас тĕлĕшпе СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, СССР Совхозсен министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене çапла тума хушас:

а) 1954—1955 çулсенче кашни машина-трактор станцинче тата совхозра трактор бригадисене техника енĕпе пулăшу парса тăма агрегатсен, трактор тата ялхуçалăх машинисен узелĕсем улăштарса илмелли фонд туса хумалла.

Улăштарса илмелли асăннă фонда запаслă пайсем расходлама палăртса панă нормăран иртерсе пĕр вăхăтра тăвасçĕ;

б) 1954—1955 çулсенче ремонт завочĕсенче, районсенчи тĕпрен юсамалли мастерскойсенче тата совхозсен мастерскойсенче агрегатсен тата тракторсемпе автомобильсен узелĕсен улăштарса илмелли фондне кашни облаçре, крайра, республикăра пур пек машина паркĕнчен юсама тухакан запаслă пайсен нормичен иртерсе 10 процент чухлĕ туса хумалла.

СССР Госпланĕн 1954—1955 çулсенчи халăх хуçалăх планĕсенче МТС-сем, совхозсем тата ремонт предприятийĕсем валли тракторсен, ялхуçалăх машинисен тата автомобильсен улăштарса илмелли фондсен агрегачĕсемпе узелĕсене туса хатĕрлесе СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата СССР Совхозсен министерствине пама пăхса хумалла.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата СССР Совхозсен министерствин предприятийĕсене çакăн пек оборудовани туса парас ĕçсене пăхса хумалла:

(штукпа)

	1954 çул	1955 çул
ДТ-54, С-80, КД-35 тата «Универсал» тракторсем валли кирлĕ двигательсем	6 500	14 500
Дизельпе ĕçлекен тракторсене тапратса ямалли двигательсем	7 000	9 500
Тракторсем валли топливо насусĕсем, форсункăсемпе пĕрле	6 000	10 500

51. Машина-трактор паркне тытса тăрассишĕн МТС-сен ответлăхне ÿстерес тата тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене юсама укçа-тенкĕ вăхăтра парса тăрасси тракторпа тунă ĕçсен пысăкăшĕнчен килмелле тăвас тĕллевпе, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине 1954 çултан пуçласа, тракторсене, комбайнсене, двигательсене, землеройкăсене, ялхуçалăх машинисене юсама тата техника енĕпе пăхса тăма тухакан тăкаксен пысăкăшне çемçе суха çине куçарса пĕр гектар тумалли ĕçшĕн тата машинăсем юсанă хыççăн мĕн чухлĕ ĕçленине кура шутласа илмелли нормăсем тăрăх шутласа памалла тума хушас.

52. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата СССР Совхозсен министерствине çапла тума хушас:

а) машина-трактор станцисемпе специализациленĕ станцисенче тата совхозсенче тракторсемпе комбайнсене юсанă хыççăн вĕсемпе ĕçлемелли срoксене республикăсем, крайсем, облаçсем тăрăх, ССР Союзĕнчи вăтам срoксене шута илсе, çирĕплетмелле;

б) республикăсем, крайсем, облаçсем тăрăх çĕр чавмалли машинăсемпе, самоходнăй сенокосилкăсемпе тата ытти машинăсемпе юсанă хыççăн ĕçлемелли вăтам срoксене çирĕплетес.

53. Республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене 2 уйăх хушшинче СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата СССР Совхозсен министерстви машинăсемпе юсанă хыççăн ĕçлеме республикăсем, крайсем тата облаçсем валли кăтартса панă вăтам срoксем тăрăх уйрăм машина-трактор станцисемпе специализациленĕ станцисен тата совхозсен тракторĕсемпе тата комбайнĕсемпе юсанă хыççăн ĕçлемелли срoксене çирĕплетсе пама хушас.

54. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе наука енĕпе тĕрĕслесе çирĕплетнĕ меслетсем туса хатĕрлес тата çак ĕçри малта пыракан опыта пĕтĕçтерсе ĕçе кĕртсе пырас тĕллевпе СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствинче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх механизацийĕн наукăпа тĕпчев институчĕн тракторсемпе автомобильсене юсас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлекен лабораторисем тата Перовăри механически завод никĕсĕ çинче Государствăн тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас тата эксплуатацилес тĕлĕшпе ĕçлекен союзлă наукăпа тĕпчев технологи институчĕ организацилемелле; ун çумĕнче опытлă завод пулмалла. Институтăн çак ĕçсене туса пымалла:

а) машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисем, районсенчи тĕпрен юсамалли мастерскойсем тата ремонт завочĕсем валли тракторсене, комбайнсене, автомобильсене, ялхуçалăх машинисемпе специальнăй машинăсене, стационарлă двигательсене тата станок оборудованийĕсене юсамалли типовой технологипе организаци меслечĕсене туса хатĕрлемелле;

б) тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама тата техника енĕпе пăхса тăма кирлĕ оборудованин, приборсен, хатĕрсен конструкцийĕсене туса хатĕрлемелле;

в) тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисемпе специальнăй машинăсене, станоксене вăй парса тăракан оборудование техника енĕпе эксплуатацилемелли тата техника енĕпе пăхса тăмалли правилăсем туса хатĕрлемелле;

г) тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас тата эксплуатацилес ĕç организацине лайăхлатмалли, ĕç нормисем, запаслă пайсем, металл тата юсанă чухне кирлĕ пулакан ытти материалсене расходламалли мероприятисем туса хатĕрлемелле;

д) ремонтпа эксплуатаци ĕçĕнчи малта пыракан опыта пĕтĕçтермелле, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас тата техника енĕпе пăхса тăрас тĕлĕшпе техникăллă документсем пичетлесе кăлармалла.

55. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата СССР Финанс министерствине пĕр уйăх хушшинче Государствăн тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас тата эксплуатацилес тĕлĕшпе ĕçлекен союзлă наукăпа тĕпчев технологи институчĕн организациллĕ структурине тата штатне 215 çынран çирĕплетме хушас.

Асăннă институтра ĕçлекен ученăй степень е звани илнĕ специалистсем валли ĕç укçи ставки СССР Совнаркомĕ 1946 çулхи мартăн 6-мĕшĕнче йышăннă 514-мĕш №-лĕ Постановлени тăрăх наукăпа тĕпчев институчĕсен работникĕсем валли туса панă пек пулмалла. Институтра ĕçлекен ытти специалистсем валли СССР Министрĕсен Совечĕ 1950 çулхи августăн 31-мĕшĕнче йышăннă 3757-мĕш №-лĕ Постановлени тăрăх пĕрремĕш ушкăна кĕрекен тĕп проект организацийĕсен работникĕсем валли палăртса хунă пек ĕç укçи ставки туса хурас.

VI.

Колхозсене агрономипе зоотехника пулăшăвĕ парас ĕçе вăйлатасси çинчен

56. Колхозсене обществăлла хуçалăха аталантарма пулăшас ĕçе вăйлатас тĕллевпе колхозсенче агрономи, зоотехника тата ветеринари ĕçĕсене туса пырассине машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисем çине хурас, çав шутпа çапла тăвас:

а) участоксенчи агрономсемпе зоотехниксем вырăнне МТС-сен штатĕсенче ялан колхозсенче ĕçлекен агрономсемпе зоотехниксем пулмалла, кашни колхозра яланах ялхуçалăх специалисчĕ е икĕ специалист ĕçлемелле пултăр. Уйрăмах пысăк колхозсенче ĕçлеме МТС штатĕнче кашни бригадăпа ферма валли пĕр специалист тытма ирĕк парас;

б) агрономсене, зоотехниксене тата ветеринари работникĕсене кăтартса панă йĕркепе районсенчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕсенчен машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисене куçарас;

в) сахăр, консерв завочĕсенче тата СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин ытти предприятийĕсенче колхозсене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен агрономсен должноçĕсене пĕтерес, çав специалистсене кăтартса панă йĕркепе МТС-сене колхозсенче ĕçлеме ярас;

г) районсен вăрлăх хуçалăхĕсенчи тата специализациленĕ вăрлăх хуçалăхĕсенчи курăксем ÿстерес енĕпе ĕçлекен агрономсене кăтартса панă йĕркепе МТС-сен штатне куçарас, вĕсене, вăрлăх тăвас тĕлĕшпе ĕçленисĕр пуçне, колхозсенче агрономи енĕпе ытти ĕçсене те туса тăма хушас;

д) районсенчи вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен лабораторисене пĕтĕм оборудованипе пĕрле МТС-сене парас, çав лабораторисенчи специалистсене кăтартса панă йĕркепе МТС-сене куçарас;

(Юлашки 3-мĕш страницăра).

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитетĕнче

Машина-трактор станцисен ĕçне малалла лайăхлатмалли мерăсем çинчен

(Юлашки).

е) зооветучастоксенчи тата зооветпунктсенчи зоотехниксене МТС-сен штатне кĕртнĕ май, зооветучастоксемпе зооветпунктсенчен ветеринари участокĕсемпе ветеринари пункчĕсем тăвас, вĕсене МТС-сене пăхăнтарас.

Çавăн пек йĕрке тăвас: МТС ĕçлекен зонăри ветеринари врачĕсенчен—ветеринари участокĕсен заведующийĕсенчен пĕри машина-трактор станцийĕн аслă ветеринарнăй врачĕ пулса тăрать.

Тĕп зооветучастоксен никĕсĕ çинче районсенчи ветеринари лечебницисем организацилес, вĕсене тытса тăма районти бюджетран укçа-тенкĕ парса тăмалла. Районти ветеринари лечебницин заведующийĕ пĕр вăхăтрах районти главнăй ветеринари врачĕ пулмалла.

57. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене 1954 çулхи çуркунне тĕлне МТС-сене колхозсенче ĕçлеме агрономсемпе зоотехниксем 100 пин çын яма хушас, çакна ялхуçалăх министерствисемпе вĕсен вырăнти органĕсене çĕнĕлле йĕркеленĕ, машина-трактор станцийĕсен участокри агрономĕсем пулмалли йĕркене тата районсенчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн участокри зоотехникĕсемпе агрономĕсем пулмалли йĕркене пăрахăçланă пирки ĕçрен пушаннă агрономсемпе зоотехниксене, аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисене, МТС-сене янипе, районсенчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕсенчи агрономсемпе зоотехниксене МТС-сене куçарнипе, ытти учрежденисемпе организацисенче ĕçлекен специалистсен шутне чакарнипе, çавăн пекех тата ялхуçалăх аслă шкулĕсемпе техникумĕсенчен вĕренсе тухакан çамрăк специалистсене МТС-сене янипе тумалла.

58. Машина-трактор станцийĕсем колхозсемпе тунă договорсенче палăртнă агрономи тата зоотехника ĕçĕсене пурнăçлас енĕпе, колхозсем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарас, колхоз производствинче ĕçе тĕрĕс организацилес енĕпе ответлăха МТС-сен колхозсенче ĕçлеме янă агрономĕсемпе зоотехникĕсем çине хурас.

Çавăн пек йĕрке тăвас: агрономи тата зоотехника ĕçĕсене пурнăçлас, ĕçе организацилес ыйтусем тата МТС-семпе колхозсем тунă договорсене пурнăçлассипе çыхăннă ыйтусем енĕпе агрономсемпе зоотехниксен хăйсен кăтартăвĕсене колхозсен правленийĕсем е председателĕсем урлă памалла.

59. МТС-семпе колхозсем тăвакан ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатас шутпа машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисен главнăй агрономĕсем çине государствăн ялхуçалăхĕнчи ĕç пахалăхне тĕрĕслекен инспекторĕсен обязанноçĕсене хурас.

Çавăн пек йĕрке тăвас: агрономи ыйтăвĕсемпе тата ялхуçалăхĕнчи ĕç пахалăхĕ тĕлĕшпе главнăй агроном панă кăтартусене тата распоряженисене обязательнă пурнăçа кĕртмелле, вĕсене облаçри, крайри ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕсем тата республикăсен ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствисем çеç улăштарма пултарассĕ.

Машина-трактор станцийĕсемпе специализациленĕ станцисен главнăй агрономĕсене облаçри, крайри ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн начальникĕ, республикăн Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕ ĕçе лартать тата ĕçрен кăларать.

60. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине МТС-сенчен колхозсене ялан ĕçлеме янă агрономсемпе зоотехниксем çинчен, МТС главнăй агрономĕсемпе главнăй зоотехникĕсем çинчен, асăннă работниксен прависемпе обязанноçĕсене кăтартса панă Положенисем виçĕ уйăхлăх срокра хатĕрлесе çирĕплетме хушас.

61. Çавăн пек йĕрке тăвас: колхозсенче ĕçлеме янă агрономсемпе зоотехниксен, çавăн пекех районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсен МТС штатне куçарнă агрономĕсен ĕç укçи машина-трактор станцийĕн участокри агрономĕсен хальхи ĕç укçипе пĕр тан пулмалла, вĕсене тата çав специальность енĕпе нумай вăхăт хушши ĕçленĕшĕн тивĕçлĕ таран ĕç укçи хушса памалла.

МТС главнăй зоотехникĕн ĕç укçи МТС главнăй агрономĕн ĕç укçипе пĕр тан пулмалла, машина-трактор станцийĕн аслă ветеринарнăй врачĕн ĕç укçи МТС главнăй зоотехникĕн ĕç укçинчен 10 процент каярах пулмалла, вĕсене тата çав специальность енĕпе нумай вăхăт хушши ĕçленĕшĕн тивĕçлĕ таран ĕç укçи хушса памалла.

62. МТС-сен колхозсенче ялан ĕçлеме янă агрономĕсемпе зоотехникĕсене хавхалантарас тĕллевпе колхозсене çапла тума сĕнес: çулталăк вĕçленнĕ тĕле, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă тăрăх, çӳлте асăннă специалистсене, хăйсен ĕçĕпе ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли плана пурнăçлама май панă пулсан, çав колхозăн председательне çулталăк хушшинче панă ĕçкунĕсен хисепĕн 10—12 проценчĕ чухлĕ ĕçкунĕ çырса памалла.

63. Министерствăсен, ведомствăсен, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен тата ытти организацисен руководителĕсене çапла тума хушас: унта ĕçленĕ, аслă шкултан тата вăтам пĕлӳ паракан шкултан вĕренсе тухнă специалистсене машина-трактор станцийĕсене колхозсенче специалистсем пулса ĕçлеме ярассĕ пулсан, асăннă специалистсене ĕçе яма тухакан расходсене çав учрежденисемпе организацисен укçинчен, Ĕç çинчен калакан законсен кодексĕн 82-мĕш статьи тăрăх тӳлемелле, кунсăр пуçне, вĕсене урăх облаçе, края, республикăна куçарассĕ пулсан, пĕр вăхăтлăха виçĕ уйăхлăх ĕç укçи чухлĕ пособи памалла.

64. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, СССР Финанс министерствипе пĕрле, МТС-сен колхозсенче ĕçлекен агрономĕсемпе зоотехникĕсене, çавăн пекех ветеринари работникĕсене колхозсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли плансене, обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли плансене тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн, ĕçри ытти çитĕнӳсемшĕн премисем памалла тăвасси çинчен икĕ уйăхлăх срокра сĕнӳсем хатĕрлесе СССР Министрĕсен Советне тăратма хушас.

65. Колхозсене çапла тума сĕнес: МТС-сен колхозсенче ĕçлекен агрономĕсемпе зоотехникĕсене пурăнмалли çуртсем уйăрса памалла, çуртсем çумĕнче хуçалăхра кирлĕ хуралтăсем пулмалла, çуртсем çумĕнче халиччен тунă нормăсем тăрăх çĕр участокĕсем уйăрса памалла, вĕсене хăйсене валли пурăнмалли çуртсем лартма пулăшмалла, çуреме транспорт укçа тӳлеттермесĕр памалла.

66. СССР Финанс министерствине МТС-сен колхозсенче ĕçлекен агрономĕсемпе зоотехникĕсене валли пурăнмалли çуртсем лартма колхозсене Ялхуçалăх банкĕнчен кивçен укçа пама хушас: пурăнмалли çурт лартма 10 пин тенкĕ, 10 çуллăха памалла, çав укçана илнĕ хыççăн виççĕмĕш çулĕнче каялла тавăрса пама пуçламалла.

67. Çавăн пек йĕрке тăвас: колхозсен ĕçĕсене машина-трактор станцийĕсем туса тăман районсенче колхозсене агрономи, зоотехника тата ветеринари пулăшăвĕ парас тĕлĕшпе халиччен йĕрке улшăнмасăр юлать, ун пек районсенчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕсен штачĕсем тата вĕсен зооветучастокĕсем халиччен пек юлассĕ, çавăн пекех агрономсене, зоотехниксене тата ветеринари работникĕсене ĕç укçи тӳлемелли йĕрке халичченхи пекех юлать.

VII.

Ялхуçалăхне материалсемпе техника парса тăрасси çинчен

68. Машина-трактор станцийĕсене тата совхозсене çĕнĕ тракторсемпе пуянлатма тата ялхуçалăх производствин мĕнпур отраслĕсене механизацилессине сарса пыма СССР Госпланне, Машиностроени министерствине, Транспортпа йывăр машиностроени министерствине, Оборона промышленность министерствине тата Авиаци промышленность министерствине халăх хуçалăх планĕсенче çакна палăртса хума хушас: ялхуçалăхне 1954 çултан пуçласа 1957 çулхи майăн 1-мĕшне çитиччен-хи тапăрта ака-суха ĕçĕсем тумалли тракторсем, 15 лаша вăйлĕ трактор çине куçарса шутласан, 500 пин трактортан кая мар тата 250 пин пропашной трактор памалла.

СССР Госпланĕн, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, СССР Совхозсен министерствин тата Машиностроени министерствин икĕ уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне машинăсем, механизмсемпе оборудовани туса кăлармалли тата ялхуçалăхне парса тăмалли плансем çинчен сĕнӳсем тăратмалла. Сĕнӳсем панă чухне çакна шута илмелле: 1954—1955 çулсенче МТС-семпе совхозсене тĕштырăсем тата çу кăлармалли культурăсем акса тăвас, улăмпа арпа пухас, улăмурисем тăвас ĕçсен комплекне пурнăçлама, итемсем çинчи ĕçсене, тырă типĕтес, утă çулас, утă пухса купа тăвас тата капана хывас ĕçсене механизацилеме, сахăр кăшманĕ, йĕтĕн-долгунец, кантăр тата çĕр мамăкĕ акса тăвас ĕçсене, транспорт ĕçĕнчи, тиесе пушатас ĕçсене тата ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсене механизацилеме кирлĕ чухлĕ кăкарса ĕçлемелли, навеснăй тата самоходнăй машинăсем памалла.

69. СССР Госпланне 1954 çулхи халăх хуçалăх планĕнче çаксене уйăрса пама палăртса хума хушас:

а) СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата СССР Совхозсен министерствине мĕнпур ĕçсем валли грузовой автомашинăсем, самосвалсем тата шассисем 50 пин, ГАЗ-69 çăмăл автомобильсем 12 пин (вăл шутра СССР Совхозсен министерстви валли 1500 автомобиль), коляскăллă мотоциклсем 4 пин, металл касакан станоксем 4600, гидравлически прессем 175, электромоторсем 5000, электросварочнăй агрегатсем 1000 тата кислород баллонĕсем 15000, çавăн пекех МТС мастерскойĕсемпе ремонт предприятийĕсене пуянлатма ытти оборудовани уйăрса памалла;

б) колхозсене сутма Центросоюза 60 пин грузовой автомобиль уйăрса памалла.

70. Строительство министерствине, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата СССР Совхозсен министерствине 1954 тата 1955 çулсенче машина-трактор станцийĕсемпе совхозсем валли 50, 25 тата 10 кубометр пысăкăш стационарнăй резервуарсем, 3 тата 5 кубометр пысăкăш цистернăсем тата 200 литр кĕрекен тимĕр пичкесем çакăн чухлĕ тума хушас:

	Пурĕ	Вăл шутра 1954 çулта	1955 çулта
Строительство министерстви			
Стационарнăй резервуарсем (пиншер кубометрпа)	1510	600	910
СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви			
Стационарнăй резервуарсем (пиншер кубометрпа)	465	235	230
Цистернăсем (пиншер кубометрпа)	192	97	95
Тимĕр пичкесем (пиншер штук)	410	210	200
СССР Совхозсен министерстви			
Стационарнăй резервуарсем (пиншер кубометрпа)	35	15	20
Цистернăсем (пиншер кубометрпа)	8	3	5
Тимĕр пичкесем (пиншер штукпа)	90	40	50

СССР Госпланĕн, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата СССР Совхозсен министерствин пĕр уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне вырăнти промышленность тата промысла кооперацийĕн предприятийĕсенче машина-трактор станцийĕсемпе совхозсем валли 1954 тата 1955 çулсенче стационарнăй резервуарсем, цистернăсем, тимĕр пичкесемпе бидонсем туса хатĕрлесси çинчен сĕнӳсем тăратмалла.

71. 1954—1955 çулсенче ялхуçалăхне оборудованипе заправочнăй хатĕрсем парса тăмалли плана çакăн пек палăртас:

Вăл шутра:

	Пурĕ (пиншер штукпа)	1955 çулта	1954 çулта
ЗИС-150 шасси çине вырнаçтарнă автоцистернăсем	5	3	2
ГАЗ-51 шасси çине вырнаçтарнă автозаправщиксем	15	5	10
Заправочнăй тележкăсем, насуссемпе тата шлангсемпе пĕрле	60	30	30
Алăпа ĕçлемелли насуссем шлангсемпе пĕрле	48	24	24

СССР Госпланĕн 1954—1955 çулсенчи производство планĕсенче союзлă тата вырăнти промышленность предприятийĕсенче асăннă чухлĕ заправочнăй хатĕрсем туса кăларма палăртмалла.

72. Нефть промышленность министерствине çапла тума хушас:

а) Главнефтесбытăн мĕнпур нефтебазисене ГОСТ-семпе техникăлла условисене пĕтĕмĕшпех тивĕçтерекен мĕнпур йышши горючипе сĕрмелли материалсен сорчĕсене турттарса пымалла тата ялхуçалăхне парса тăмалла;

б) çакăн пек йĕрке тăвас: машина-трактор станцийĕсемпе совхозсене сĕрмелли материалсем панă вăхăтрах Главнефтесбыт базисен вĕсене нормăпа кирлĕ чухлĕ АСФО фильтрсем те памалла. Главнефтесбыт базисене АСФО фильтрсем çителĕклĕ кӳрсе пыма мерăсем йышăнмалла, тракторсем çинчи АСФО фильтрсене кăтартса панă срокра улăштарса тăма май пултăр.

СССР Госпланĕн халăх хуçалăх планĕсенче Нефть промышленность министерствине АСФО фильтрсем туса кăларма картон тата ытти материалсем уйăрса пама палăртмалла.

73. Нефть промышленность министерствине, 1954 çултан пуçласа, ĕçлесе усă курнă çусене хăйĕн предприятийĕсенче ялхуçалăхĕ валли тасатассине (регенераци тăвассине) йĕркелеме хушас.

Çакна май 1955 çултан пуçласа МТС-семпе совхозсене ĕçлесе усă курнă çусене тасатассинчен хăтарас.

СССР Госпланĕн, Нефть промышленность министерствине, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствипе тата СССР Совхозсен министерствипе пĕрле, пĕр уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне ĕçлесе усă курнă çусене тасатассине Нефть промышленность министерствин системинче йĕркелесси çинчен сĕнӳсем тăратмалла.

74. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата Машиностроени министерствине çапла тума хушас: çĕнĕ машинăсем заказ памалли тата вĕсене тĕрĕслесе пăхмалли халичченхи йĕркене çĕнĕрен пăхса тухмалла, çапла вара çĕнĕ ялхуçалăх машинисене производствăна кĕртес ĕçе хăвăртлатма май килтĕр.

75. СССР Госпланне, Машиностроени министерствине, Транспортпа йывăр машиностроени министерствине çапла тума хушас: 1954 çултан пуçласа тракторсем, ялхуçалăх машинисем тата ялхуçалăхĕнчи автомобильсем валли кирлĕ чухлĕ, çирĕплетнĕ нормăсем тăрăх детальсен мĕнпур номенклатури енĕпе, потребительсен тата сбытовой кантурсенче кăтартса панă чухлĕ юлашки юлмаллине шута илсе, запаслă пайсем туса кăларассине тата парса тăрассине палăртмалла.

Машиностроени министерствин тата Транспортпа йывăр машиностроени министерствин, СССР Госпланĕпе килĕштернĕ тăрăх, пĕр уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне запаслă пайсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен тата тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли паракан запаслă пайсен отпускной хакĕсене йӳнетесси çинчен сĕнӳсем тăратмалла.

76. МТС-сенче механизаторсен яланхи кадрĕсем çителĕклĕ пулмалла тăвас, МТС-сене ертсе пыракан тата инженерсемпе техниксен кадрĕсемпе çирĕплетес, кадрсене хатĕрлес ĕçе лайăхлатас, МТС-сенчи строительствăна организацилес тата машина-трактор паркĕпе усă курассине лайăхлатас тĕлĕшпе пурнăçламалли мероприятисене çирĕплетес.

77. Машина-трактор станцийĕсен типовой штачĕсене çирĕплетес.

78. Çавăн пек йĕрке тăвас: МТС-семпе колхозсем хушшинчи производствăлла хутшăнусене малашне те вĕсем тăвакан договорсенче палăртса парассĕ. Машина-трактор станцийĕ колхозпа тунă договор закон пулса тăрать, ăна МТС-ăн та, колхозăн та обязательнă пурнăçламалла.

Вырăнти совет тата парти органĕсене договорсенче палăртнă обязательствăсене машина-трактор станцийĕсемпе колхозсем мĕнле пурнăçланине тĕтăшах тĕрĕслесе тăма хушас.

79. 1954 çултан пуçласа, МТС тăвакан ĕçсемшĕн натурăпа илекен тӳлеве çирĕп ставкăсем тăрăх шутласа илме тытăнни усăллă пулать тесе шутлас.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине çапла тума хушас: МТС колхозсенче тăвакан кашни ĕç тĕлĕшпе зонăсем тăрăх тунă дифференциленĕ çирĕп ставкăсемпе тӳлемелле тăвасси, пысăк тухăçлă тырпулшăн хавхалантарса премии шучĕпе тӳлемелле тăвасси çинчен, çавăн пекех натурăпа илмелли тӳлеве шутламалли тата натуроплата шучĕпе ялхуçалăх культурисем памалли йĕрке çинчен 2 уйăх хушшинче сĕнӳсем хатĕрлесе СССР Министрĕсен Советне тăратмалла.

80. СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине çапла тума хушас:

а) машина-трактор станцийĕсем колхозсене ĕç туса парассине организацилес енĕпе пулнă улшăнусене шута илсе, МТС колхозсемпе тăвакан типовой договорăн çĕнĕ проектне хатĕрлемелле тата ăна пĕр уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне çирĕплетме тăратмалла;

б) çак Постановление кăларнă май СССР Правительствин Постановленийĕсемпе распоряженийĕсем чылайăшĕ хăйсен вăйне çухатассĕ, вĕсен перечение пĕр уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне тăратмалла.

* * *

Машина-трактор станцийĕсен ĕçне лайăхлатассине пысăк вырăна хурса, СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, союзлă республикăсенчи коммунистсен партийĕсен Центральнăй Комитечĕсене, КПСС обкомĕсемпе крайкомĕсене çапла тума хушассĕ: МТС-сене ертсе пырассине лайăхлатмалла, колхоз производствин мĕнпур отраслĕсенче ĕçе механизацилес тĕлĕшпе МТС-сен ĕçне вăйлатмалла, ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна—ялхуçалăхĕн мĕнпур культурисен тухăçлăхне чылай ӳстерес, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне малалла нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне чылай ӳстерес, çĕр ĕçĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн пĕтĕм продукцине тата таварлă продукцине ӳстерес задачăна—ăнăçлă татса парас тĕлĕшпе машина-трактор станцийĕсен ответлăхне ӳстермелле.

*

Ишлей районĕнчи «Знамя коммунизма» колхоз çулсеренех пахча çимĕç ӳстерсе пысăк тупăш илет. Пахча çимĕç бригадин бригадирĕ пулса нумай çул хушши А. И. Скворцов юлташ ĕçлет. Бригада кăçал та 14 гектар çинче хăяр, купăста, кишĕр ӳстернĕ. Пахча çимĕç сутса колхоз 18 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пахча çимĕç бригадин членĕсем купăста касаççĕ. Малти вырăнта Е. Ф. Морозова (сулахайри) тата Ф. Н. Миронова колхозницăсем.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

*

Виçĕ республика ăмăртăвĕ

Колхозсемпе МТС-сем ялхуçалăх ĕçĕсен планне октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă (процентпа)

	Мордва АССР-ĕ	Мари АССР-ĕ	Чăваш АССР-ĕ
Авăн çапнă	93,8	70,2	77,4
Йĕтĕн татнă	—	98,2	95,9
Кантăр татнă	43,2	69,3	95,4
Çĕрулми кăларса пухнă	40,0	37,3	61,7
Тымарçимĕçсем кăларса пухнă	24,0	33,2	28,1
Силос хывнă	52,9	59,6	63,8
Кĕрхи çĕртме сухи тунă	64,0	59,6	67,4
Хура çĕртме сухи тунă	26,0	48,0	23,8
Вăрлăх хывнă	94,5	86,7	91,1
Ку шутра вăрлăхлăх çĕрулми хывнă	14,7	30,5	51,9
Выльăх апачĕ хатĕрленĕ		55,9	64,9
Тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне тултарнă	83,8	80,9	87,9

Çĕрулми кăларас ĕçе хăвăртлатмалла

ШАХАСАН. Районти ĕççыннисем ялхуçалăхне малалла вăйлатасси çинчен йышăннă постановленисене ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессĕ. Çак кунсенче Молотов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Б. Кириллов юлташ) тата Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Л. Павлов юлташ) çĕрулми кăларса пĕтерчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз 33 гектар çинчен кашни гектар пуçне 140—150 центнер çĕрулми пухса кĕртрĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада (бригадирĕ К. Григорьев) гектартан 200 центнера яхăн çĕрулми пухса кĕртет. Колхоз вăрлăх фондне çĕрулми çителĕклĕ хывса хăварнă.

Çĕрулми кăларас ĕç çавăн пекех «Герой», Ленин ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче те аван пулса пырать. Асăннă колхозсенче государствăна çĕрулми парас, вăрлăх тата фураж фончĕсене хывас ĕçсем те вăхăтра пулса пыраççĕ.

Анчах ку тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем те сахал мар-ха. Сăмахран, Ильич ячĕпе, «Слава», Суворов ячĕпе тăракан колхозсенче çак ĕç чăтма çук япăх пулса пырать. «Память Ильича» тата «Вперед» колхозсем вара 20-шер гектар çĕрулми кăлармалла пулсан, 2—3 гектар кăна кăларнă. «Память Ильича» колхоз председателĕ Н. Тимофеев сиенлĕ шухăшпа пурăнать. Унăн шучĕпе малтан кил çумĕнчи пахчари çĕрулмине кăларса пĕтермелле, вара тин уйри çĕрулмине кăларма тытăнмалла. Çакна пула колхозра çĕрулми кăларма тытăнманпа пĕрех.

МТС та колхозсене çителĕклĕ пулăшмасть. Çĕрулми кăлармалли икĕ машинăпа тухăçлă ĕçлемессĕ.

Çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. Çĕрулми кăларас, вăрлăхпа фураж фончĕсем хывас тата государствăна çĕрулми парса татас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

Г. ЛУЧ.

Сад эрнине лайăх ирттерер

РСФСР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Россия Федерацийĕнчи автономиллĕ республикăсемпе облаçсенче тата крайсенче октябрĕн 1-мĕшĕпе 7-мĕшĕ хушшинче «Сад эрни» ирттерессĕ.

«Сад эрни» ирттернин тĕллевĕ хуласемпе ялсенче, колхозсемпе совхозсенче садсемпе çырла пахчисем çĕнĕрен лартса ӳстерес, халĕ ӳсекен садсене сарса пырас ĕçе совет общественноçне анлăн хутшăнтарасси пулать.

Кăçалхи çул «Сад эрни» колхозниксен политикăлла тата производствăлла активлăхĕ вăйлăн ӳссе пынă вăхăтра иртет. Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ «СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени ялхуçалăхĕнчи ĕççыннисене Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн çĕнĕрен пысăк вăй-хăватпа ĕçлеме çĕклерĕ. Пленум, ялхуçалăхне малалла аталантармалли тĕп задачăсене кăтартса панипе пĕрлех, колхозсемпе совхозсенче садсемпе çырла пахчисем ӳстерес ĕçе хăвăртрах сарса пыма кирли çинчен асăрхаттарчĕ.

Анчах пирĕн республикăри колхозсенче садсем лартса ӳстерес ĕç начар пулса пырать-ха. Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата райисполкомсем чылайăшĕ колхозсенче, район центрĕсенче, ялсенче садсемпе çырла пахчисем лартса ӳстерес ĕçпе сахал интересленеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ республикăри колхозсенчен виççĕмĕш пайĕ хăйсен çĕрĕ çинче сад лартса ӳстерме халĕ те пуçăнман. Садсем йышăнакан çĕр лаптăкĕ халĕ те 1940 çулта пулнă шая çитеймест. Нумай колхозсенче çимĕç йывăççисем лартнă пулсан та, садсем тавра карта тытман, çимĕç йывăççисене хӳтĕлекен тăрăхсем лартман.

Çĕнĕ садсемпе çырла пахчисем тăвас тĕлĕшпе государство планне республика çулсеренех тултараймарĕ. 1953 çулхи çуркунне йывăççем лартмалли плана колхозсем мĕн пурĕ те 39 процент кăна тултарчĕç. Садсем тăвас ĕç уйрăммăнах Улатăр, Куславкка, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсенче япăх пырать.

Улма-çырла йывăççисене вăрăран ӳстерекен питомниксем кăçал кĕркуннене лайăхрах кĕтсе илчĕç. Вĕсем ӳстерсе хатĕрленĕ çимĕç йывăççисем колхозсенче кăна мар, колхозниксен тата рабочисемпе служащисен, больницăсемпе шкулсен пахчисенче лартмалăх та пур.

Халĕ çимĕç йывăççисене лартса хăвармалли чи лайăх вăхăт çитрĕ. Çак вăхăтпа туллин усă курас пулать. Кая юлса лартни йывăççемшĕн сиенлĕ пулма пултарать.

«Сад эрнинче» çимĕç йывăççисем нумайрах лартса хăварма пур майсемпе те тăрăшас пулать. Садсем лартмалли 1953 çулхи плана пĕтĕмĕшпех тултармалла, 1954—1955 çулсем тĕлне садсемпе çырла пахчисен çĕр лаптăкĕ нумай хут пысăкрах пулмалла.

Çимĕç йывăççисем лартса ӳстерес ĕçре МТС-сем пысăк вырăн йышăнмалла. Колхозсем кăçал кĕркунне тата килес çул çуркунне йывăççем лартмалли пĕтĕм лаптăка сухаласа хатĕрлесси — МТС-сен задачи.

Ялхуçалăх органĕсемпе МТС-сем тата питомниксем çимĕç йывăççисене колхоз пасарĕсенче сутмалла.

«Сад эрнинче» садсене хĕле хатĕрлес ĕçсене те тимлĕн туса ирттермелле. Начар пăхнине пула пĕр çимĕç йывăççи те пĕтмелле мар. Сад пахчисенче йывăççисен хушшисене сухаласа хăвармалла, профилактикăлла ĕçсене пурне те туса ирттермелле.

Сад эрнине ĕççыннисен анлă массисем хутшăнтарар. Кашни колхозра, район центрĕнче, больницăсемпе шкул участокĕсенче, аслă çулсен хĕррисенче, ĕççыннисен кил вырăнĕсенче çимĕç йывăççисем йышлă лартса хăварар.

ВАРВАРА ВАСИЛЬЕВНА

КАЛАВ

Анаçран тухсан нумаях та каймарăмăр, автобус чарăнчĕ. Пăхатпăр çул çинче тăпăл-тăпăл тумланнă хĕрарăм тăрать. Аллинче пĕчĕк чемодан.

Автобус алăкĕ уçăлчĕ.

— Варвари! Эсĕ-и?—кăшкăрчĕ, уçнă кантăк витĕр пăхса, Сĕрпуре ларнă хĕрарăм.

— Эпĕ те-ха...—илтĕнчĕ автобус патне çывхаракан хĕрарăм сасси.

— Ав, хыçалта вырăн пур, ларăр, —пуçне сулчĕ шофер, çĕнĕ пассажирка автобуса кĕрсен.

— Мана вырăна ларăр, аки, хыçалта силлентерет,—сĕнчĕ Сĕрпу арăмĕ çумĕнче ларакан ача, хăй вырăнĕнчен тăрса.

— Спасибо, ачам,—тав турĕ çĕнĕ пассажирка, патти скамье çине вырнаçса. Анчах хăй пĕлĕшне алă паричченех каялла çаврăнса пăхрĕ.

— Эсĕ пионер пулатăн-и, ачам?

— Пионер-çке,—йăл кулчĕ хыçала куçса ларнă ача.

— Пионер пулĕ, терĕм çав. Ваттисене сума суса пĕлетĕн.

Автобус Шупашкаралла тапранса кайрĕ.

— Сывă-и, Дарья Кузьминична?—аллине Сĕрпу арăмĕ еннелле тăсрĕ çĕнĕ пассажирка.—Курманни нумай пулать...

— Ху пасара çÿреме пăрахрăн та... Ĕлĕк кашни пымассерен пирĕн пата кĕрсе тухаттăн,—хуллиннă пек пулчĕ Сĕрпу арăмĕ.

— Ĕлĕк çаплаччĕ те, халĕ вăхăт çукрах çав,—ответлерĕ çĕнĕ пассажирка.

— Кунта епле лекрĕн тата? Ку таврара хурăнташ çукчĕ пулас сирĕн?—ыйтрĕ Дарья Кузьминична текенни.

— Шупашкара кайма тухрăм та, çул çинчи «Çĕнĕ пурнăç» колхозăн кайăк-кĕшĕк фермине кĕрсе курас терĕм. Хаçатсенче питĕ мухтаса çыраççĕ те. Юри килес — ерçместĕп... Мĕн калассипур, аван ферма! Анчах пирĕнне çитеймест.

Çĕнĕ пассажирка хăйсен ферми çинчен калама пуçларĕ. Пассажирсем, пĕр сĕнксе ларакан, аллипе темĕн хулăнăш кивелнĕ портфель ыталанă парка çынсăр пуçне, пурте тимлĕн итлеме пуçларĕç. Шофер та, машини ытла ан кĕрлетĕр тесе, хăвăртлăх аврине тепĕр карта куçарчĕ.

— Шупашкара мĕн çăмăлпа? Пасара-и?—ыйтрĕ Сĕрпу арăмĕ, пĕлĕшĕ хăйсен ферминче кăркка ĕрчетни çинчен калама пуçласан.

Пассажирсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç: колхоз фермипе интересленмен Сĕрпу арăмĕ çĕнĕ пассажирка сăмахне пулни вĕсене килĕшмерĕ курăнать.

— Пасара мар-ха, Верховнăй Совета каятăп,—ответлерĕ çĕнĕ пассажирка Дарья Кузьминична текеннине, кăшт кÿреннĕ пек пулса. Пĕлĕшĕ сăмахне пулни ăна та килĕшмерĕ пулас.

— Пĕр-пĕр жалоба пама пулĕ ĕнтĕ. Эс жалобăсем çырма юратаканччĕ,—тăрăхланă евĕр тĕртсе илчĕ Сĕрпу арăмĕ.

— Виçĕ çул ĕнтĕ жалоба таврăш çырманни... Жалоба çырма мар, хаçат вулама та вăхăт çук. Ăна та, апат çиме таврăнсан, Танюк вулакалаçа парать.

Сĕрпу арăмĕ кăн! пăхрĕ.

— Ан тĕлĕн. Ĕлĕкхи пасар Варукĕ тек çук ĕнтĕ, сан çумăнта çамрăк Варвари ларать.

Леш çаплах пĕлĕшĕ çине куçне чарса пăхать.

— Халĕ мана колхозри тантăшсем çапла чĕнеççĕ,—ăнлантарчĕ пĕлĕшне çĕнĕ пассажирка.—Çамрăксем атте ятне хушса Варвара Васильевна тесе те чĕнеççĕ...

Çамрăк тенĕрен, сăмахлакан хĕрарăмсем иккĕшĕ те тахçанах хĕрĕхрен иртнĕ пулас та...

— Пионер мана çĕнĕ çын турĕ, Дарья Кузьминична, пионер. Тавтапуçах ăна, —тулли кăмăллăн сывласа илчĕ Варвара Васильевна.

«Пионер» сăмаха илтсен, леш, хыçала куçса ларнă ача, шофер патне пычĕ те, баулне урайне тăратса, çĕнĕ пассажиркăна хирĕç ларчĕ.

— Сирĕн пионер çинчен пĕлес килет-и? Юрать, юрать, каласа парăп, —йăл кулчĕ Варвара Васильевна. Унтан, пассажирсем енне çаврăнса, хăй калавне пуçларĕ:—Тăватăм çул пулчĕ ку мыскара, тырă вырма тухсан... Эпĕ анкартинче хăяр тататăп. Хам та çав... Колхозниксем хĕрсе тырă выраççĕ, эпĕ намăссăр, пули-пулми хăярпа аппаланатăп. Ухмах пулнă мар-и, ухма-ах!—юлашки сăмахĕсене тарăхсах каларĕ Варвара Васильевна.—Такăр çулпа утма пĕлмен, кукăр сукмакпа йăкăртатса çÿренĕ. Колхозран хăвалаçа ан кăларччăр тесе, минимум ĕçкунĕ тăваттăм та кайран—Сĕрпу те Шупашкар, Шупашкар та Сĕрпу. Тек пасара чупаттăм.

— Пурнăç малашлăхне курман пулать?—илтĕнчĕ пĕр пассажир сасси.

— Çавă çав,—пассажир калаяине çирĕплетрĕ Варвара Васильевна.—Хаçат вуламан, пухусене çÿремен... Пирĕн хирте, леш ГЭС тĕлĕнчи сăртра, пĕр хăрнă хурама ларать. Киремет хурами пулнă, теççĕ-и çав... Ларать никама кирлĕ мар йывăç пĕр-пĕччен. Ун çумĕнче колхоз сад пахчи тавра лартнă çамрăк хурăнсем кашлаççĕ. садра улмуççисем, чие йывăçĕсем хăйсен чечекĕсемпе чуна савăнтараççĕ. Ку йывăçăн вара шăрăхра кĕтÿçĕсене канса ларма сулхăнĕ пулин хăть. Çав киремет хурами хăраххи пулнă ĕнтĕ эпĕ те.

Итлекенсем кăр! кулса ячĕç.

— Кулăшла пулмасăр, ара... Манашкал, [illegible] [illegible], пурнăç [illegible] курманскерсем пур-ха ялсенче. Нумаях мар та, çапах та çуркунне, юр ирĕлсен, тарăн варсенче выртса юлнă шурă хаптăксем пек, тĕллĕн-тĕллĕн курăнкалаççĕ... Ну, вот... Эпĕ хăяр йăранĕсем хушшинче хăштăртатнă чух анкартине ман кĕçĕн хĕр Танюк чупса пычĕ.

— Анне, анне! Сан сăнна хаçат çине кĕртнĕ,—тет. Хăй хĕпĕртенипе пĕр вырăнта тăра пĕлмест. Ара амăш сăнне хаçата кĕртни хисеп-çке-ха.

— Мĕнле хаçат çине?—ыйтрăм хĕрĕмрен.

— Леш, клуб умĕнчи çине,—терĕ те Танюк, каллех урама вĕçтерчĕ.

Шухăшлатăп: «Мĕншĕн ман сăна хаçата кĕртнĕ-ха? Ятлă çын пулсан тути-сути хăть...» тетĕп.

Хам сăна кайса курас тесе, урама тухрăм. Урамра пĕр çын та курăнмасть. Ача-пăча та çук. Пĕр Танюк анчах, çара урипупанĕсене вĕлтĕртеттерсе, хутлăхалла чупать. Шăп. Кассăн-кассăн вĕрекен ăшă çил çеç вăхăчĕ-вăхăчĕпе йĕтем çинчи аван çапакан машина шавне вĕçтерсе килет.

Пускил старикки туйине тулласа тухрĕ.

— Ăçта пуçтарăнтăн, Ахванеç мучи?—тесе ыйтрăм кунтан.

— Ара, пилĕк сура пуçларĕ те... Уйăх пĕтнĕ çĕре çумăр ан пултăр, тетĕп. Колхозниксене çĕмел тума кайса пулăшасха,—терĕ старик, укăлча еннелле утса.

Ман темĕншĕн сасартăк чĕре ыратса кайрĕ: «Кăмака çинче лармалли çитмĕл сулхи çын ĕçлеме каять! Эпĕ...» Клуб патне утрăм. Колхоз стена хаçатне çулла клуб умне çакаççĕ те пирĕн...

Хаваслă юрă илтĕнсе кайрĕ. Юрă çывхарнăçемĕн çывхарать. Урампа тулли михĕсем тиенĕ грузовик тусан вĕçтерсе килет. Машина çинче хĕрсем. Государствăна тырă леçме каяççĕ. Çавсем юрлаççĕ иккен. Юрри... Чуна çĕклентерсех ярать. Кашни çаврăм хыççăн аслă партие тавтуса юрлаççĕ.

— Варвари аки, атя Шупашкара! Пасарта хăяр хакĕ ÿснĕ, тет, — кăшкăрчĕ пĕри, машина ман тĕле çитсен.

«Ку тăрăхласа каларĕ пулĕ те-ха» —терĕм ăшăмра, мĕншĕн тесен иртнĕ пасарта пĕр аркă хăяра та аран сутса хăвартăм. Ара, колхозсем машини-машинипе хăяр тиесе пынă та, хула арăмĕсем ман пеккисем çине çаврăнса та пăхмаççĕ.

Клуб умне çитрĕм. Хăма çинче колхозри стена хаçачĕн çĕнĕ номерĕ çакăнса тăрать. Пăхрăм та шалт тĕлĕнсе кайрăм: колхозри стахановецсен сăнĕсем хушшинче Урине лара парать. Урине вăл ман тантăш та-ха. Ачаранпах пĕрле ÿсрĕмĕр, колхоза та пĕр çул çырăнтăмăр... «Ак, тамаша! Иртнĕ çул Уринене çулсерен минимум тултарса пыманшăн чут колхозран кăларса ямарĕç. халĕ, ав, ятлă çын пулнă», тетĕп. Вăл та çав, манашкал, хăй хуçалăхĕнче ытларах кăштăртатма юрататчĕ.

— Хăй йăнăшне вăхăтра ăнланса илнĕ пулать сирĕн тантăш,—сăмах тĕртсе хучĕ пасăр калаçăва хутшăннă пассажир.

— Вăхăтра тени тĕрĕс мар пулĕ те: эпир колхоза кĕни вуннилĕк çул çитнĕччĕ,—тавăрса хучĕ Варвара Васильевна.—Темĕскер, аван мар пек туйăнса кайрĕ: тантăш—ятлă çын, эпĕ...

Хăй çинчен мансах, Варвара Васильевна хăйĕн тантăшĕ колхоз ĕнисене пăхса çапа тухни çинчен калама пуçларĕ. Сăмах майĕн, хăйсен выльăх-чĕрлĕх фермисене те мухтама тытăнчĕ: ăратлă ĕнисемпе сысисене те, хулăн та вăрăм хÿреллĕ сурăхĕсене те, нумай пулмасть Шупашкарти ипподромра лашасен ăмăртăвĕнче паллă вырăн йышăннă «Сĕмрен» ятлă ăйăрне те аса илчĕ. Пионер астутарсан тин хăй çĕнĕ çине куçрĕ:

— Э, ман сăна-и? Кĕртнĕ, кĕртнĕ. Хаçатăн сылтăм енчи аялти кĕтесне вырнаçтарнă. Пасара каятăп пек. Пĕр хул айĕнче кишĕр çыххи, тепĕр хул айĕнче чĕкĕнтĕр çыххи, сылтăм алăпа хăяр тултарнă çатан лăпă йăтнă, сулахайпе çăмарта витри, çурăм хыçĕнче пĕрне. Пĕрнине тÿпелесех улма тултарнă. Ман çăвартан сăвăланă сăмахсем йĕри-йĕркипе вĕçсе тухаççĕ.

«Колхоз мулĕ мĕн мана?
Хам пурлăхран пахи çук!
Улма, кишĕр, çăмарта
Сутса юлас хак пур чух!»

Ку сăмахсене эпĕ калатăп пулать вара. Колхоз мулĕ хамăн мул иккенне ку таранччен ăнланса илмен пулать эп. Этем ăнланулăхĕ пурнăç ÿсĕмĕнчен юлса пырать тени тĕрĕс çав. Иртнĕ пурнăç юлашкисем кансĕрлесе тăраççĕ-çке пире. Ĕлĕк эпир хамăр кил тулашĕнчине курман вĕт, курасшăн та пулман... Ну, вот... Хам сăн çине пăхса тăнă чух, сисмен те, мана ача саденчи ачасем хунăрласа илнĕ. Ача сачĕ пирĕн клубпа юнашарах та... Темĕн пысăкăш çĕнĕ çурт. Пĕтĕм ял вĕт-шакăрĕ çавăнта. Колхозницăсене ĕçлеме питĕ ансат...

— Вальвали аки, ма сан пĕр куçу кунталла, тепĕри унталла пăхать?—аллисемпе унталла-кунталла сулласа ыйтрĕ пускил хĕрачи. Хăй сылтăмпа сулахая та уйăрса илеймест-ха. Ăçтан уйăрса илтĕр: тырă вырма тухас умĕн çеç тăватă çул тултарчĕ те.

— Пĕр куçĕпе Варвари аппа Иван Петрович çине пăхать: тырă вырнă чух пасара çÿренĕшĕн ан ятлатăр, тет (Иван Петрович вăл пирĕн председатель те-ха...), теприннипе атте çине,—ăнлантарчĕ пускил хĕрачине хулăн сасăллă бригадир ывăлĕ, çитĕннĕ çын пек сăмахласа.

Ачасем пĕрре ман çине, тепре картина çине пăха-пăха илеççĕ те, ахăлтатсах кулаççĕ. Кулмасăр ара: пит кулăшла тунă вĕт ман сăна. Хам та, пăхса тăтăм-тăтăм та хамăн чакăр куçлă сăн-пит çине, тÿсейнерĕм, кулса ятăм.

— Анне, çăварăнтан тухакан сăмаххусене вуласа парсамччĕ,—кĕтмен çĕртен ыйтрĕ ман Танюк.

«Аван-ха, ачасем хут пĕлмеççĕ, вулама пĕлсен вĕсем те ятлама тытăнĕччĕç мана,—тесе тăраттăм ĕнтĕ, çавăнтах: «Анна! Колхозниксем ĕçрен таврăннă чух ку хаçата вулаççĕ вĕт! Ман сăн çине пăхса пĕççисене çапсах кулаççĕ-иç... Ак тамаша! Ял кулли пултăм вĕт. Кун хыççăн халăх çине тухма намăс!»—терĕм те, тÿрех правление чупрăм. Мĕн тума каятăп, хам та пĕлместĕп. Унта тата никам та çук. Пĕр учетчица телефонпа сăмахласа ларать. Леш, малтанхи председателĕн кĕçĕн хĕрĕ, Иван Захарыч Анюкĕ. Астăватăн пулĕ, сиртен икĕ кил урлă пурăнатчĕç?—Сĕрпу арăмĕ енне çаврăнса ыйтрĕ Варвара Васильевна.—Эсир, колхоза кĕрес мар тесе, Сĕрпуве пурăнма куçсан, вăл вĕренме кайрĕ. Халĕ те колхозра ĕçлет, агроном. Çавăн хĕрĕ, комсомолка. Пит çивĕчскер: хора та ертсе пырать, спектакльсем те лартса парать. Сцена çинче ташланă чух халăх алă çупса ывăнать вара. Артистка пулать пулĕ.

Сĕрпу арăмĕ чĕнмерĕ.

— Анюк патне кĕтĕм. Вăл тăхтама ыйтрĕ те пуçланă калаçуне тăсрĕ:

— «Çăлтăр-и?..» Салам!.. Анюк сăмахлать... Кала-ха, ыраш миçе процент вырăтăр? Государствăна миçе пăт леçрĕр?.. Тавтапуç.

Унтан «Гвардеецă», «Шурăмпуçне» тата районти пилĕк-ултă паллă колхоза шăнкăртаттарчĕ. Пĕр колхозпа сăмахлать те, хут çине çырать. Эпĕ вăл калаçнине итлесе тăратăп. Намăса ниçта хума пĕлместĕп вĕт, çĕр айне анса каясса çитрĕм! Намăс пулмасăр, ара: колхозниксем ытти колхозниксемпе ăмăртса ĕçлеççĕ, эпĕ...

— Вот!—терĕ Анюк, телефонпа сăмахласа пĕтерсен.—Пирĕн колхоз кăçал районти малти вырăна тухатех!

«Ав мĕнле çынсем çитĕнеççĕ!—тетĕп.—Вунулттăри хĕр колхоза малти вырăна кăларассишĕн çунать, эпĕ, çитĕннĕ, çитĕннĕ çеç мар, ватăла пуçланă çын, хам ĕмĕрте темĕнле инкек-синкек те тÿснĕскер, ял кулли пулса тăтăм...» Çав вăхăтрах Ахванеç мучи те, тырă леçме каякан хĕр тăрăхлани те, Урине тантăш та, хамăн стена хаçат çинчи чакăр куçлă сăн та аса килчĕ. Каласан ĕненмĕр, юлташсем, хам çине кÿреннипе куççуль юхса тухрĕ. Намăс тĕтĕм мар, куçа çимест, теççĕ. Тĕрĕс мар вăл. Намăс çынна макăртма та пултарать.

— Эс мĕн çăмăлпа килсеттĕн, Варвари аки?—кăмăллăн ыйтрĕ манран Анюк.

Эпĕ ăна хирĕç нимĕн те калама пĕлместĕп. Унăн йăл кулса тăракан чипер сăн-пичĕ çине пăхрăм та, сĕтел çине тĕшĕрĕлсе анса, макăрмаллипех макăрма пуçларăм. Анюк хăраса ÿкрĕ, лăплантарма пуçларĕ. Халĕ те асран каймаççĕ унăн кĕмĕл шăнкăрав пек янракан çепĕç сăмахĕсем:

— Сисетĕп мĕншĕн кулляннине: сана хаçат çинчи сăну кÿрентернĕ. Аван мар ĕнтĕ, чăнах та, анчах хăвна критикленине кÿренмесĕр йышăнас пулать, Варвари аки. Пурте пĕлеççĕ, эсĕ хастар çын, анчах хăвăн вăйна, хăвăн пултарулăхна кирлĕ мар çĕре сапаласа пĕтеретĕн. Ав, Урине аки мĕнле колхозница пулса тăчĕ. Вăл санран та япăхрах ĕçлетчĕ вĕт колхозра,—терĕ вунулттăри комсомолка.

Эпĕ: «Тавтапуç, хĕрĕм, ырă сăмахушăн!»—тесе ыталарăм та Анюка, бригадира шыраса тупас тесе, урама чупса тухрăм. Мана хирĕç Василь Васильчăпа Иван Петрович килсе параççĕ.

— Э, Варвара Васильевна! Эпир сана чĕнме ярасшăнччĕ,—аякранах кăмăллăн кăшкăрчĕç иккĕшĕ те.

Чарăнтăм. «Ак ятлама пуçлаççĕ ĕнтĕ»—тесе тăратăп. Вĕсем, ятлас вырăнне, алă пачĕç те шăкăлтатсах сăмахлама пуçларĕç манпа. Эпĕ Василь Васильчран кĕлте сыхма е йĕтем çине ĕçлеме яма ыйтрăм.

— Çук, çук, пирĕн унта çын çителĕклĕ. Иван Петровичпа иксĕмĕр сана кайăк-кĕшĕк фермине ярас тесе канашларăмăр. Эс чăх-чĕп пăхма маçтăр,—терĕ вăл.

— Ху та пĕлетĕн, кайăк-кĕшĕк ферми пирĕн ытти фермăсенчен юлса пырать. Мĕнле, килĕшетĕн-и?—ыйтрĕ Иван Петрович.

Эпĕ хĕпĕртенипе ним калама пĕлместĕп. Тăрсан-тăрсан, йăл кулакан председательпе бригадир çине пăхрăм та:

— Мĕнле, юлташсем, кăркка ĕрчетме пуçлас мар-и? Пит тупăшлă кайăк,—терĕм ятăм.

— Тĕрĕс, Варвара Васильевна! Ырлатпăр,—терĕç иккĕшĕ те.

— Варвара Васильевна, эсир Верховнăй Совета, темерĕр-и?—ыйтрĕ шофер.

— Çавăнта, çавăнта,—ответлерĕ Варвара Васильевна.

Эпир ăна итлесе Шупашкар урамне кĕрсе кайнине те сисмен.

— Варвара Васильевна, эсир сире пионер çĕнĕ çын турĕ, терĕр, пионер çинчен пĕр сăмах та каламарăр,—ыйтрĕ хирĕç ларакан ача.

— Каламарăм-и, ара? Ман сăна пионер ÿкернĕччĕ вĕт, Санькка ятлăскер. Халĕ вăл Шупашкарта картинăсем тума вĕрентекен шкулта вĕренет. Пит лайăх тăвать вара çын сăнне. Стена хаçачĕн тепĕр номерĕ валли вăл ман сăна фермăна пырсах ÿкерчĕ. Ун çинче сăмса та çарăк пек марччĕ, куççем те чакăр марччĕ. Пĕр хул айĕнче кăркка, тепринче хур, хулпуççисем çинче шап-шурă чăхсем. Леш, кулăшла сăн тĕлне çÿле «Пасар Варукĕ» тесе çырнăччĕ, кун тĕлне «Çамрăк Варвари» тесе çырнăччĕ.

Автобус чарăнчĕ. Варвара Васильевна пассажирсемпе сывпуллашрĕ те, автобусран тухса, Советсен çуртĕ еннелле утрĕ.

— Орден илмелле-ха, — илтĕнчĕ ун сасси.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ.

Румыни Халăх Республикин Хĕçпăшаллă Вăйĕсен кунĕ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 2-мĕшĕнче Румынири ĕçсыннисем Румыни Халăх Республикин Хĕçпăшаллă Вăйĕсен кунне паллăртнă. Бухарестра ĕçсыннисен савăнăçлă пухăвĕ пулнă. Унта Хĕçпăшаллă Вăйсен министрĕн заместителĕ Чаушеску доклад тунă.

Хĕçпăшаллă Вăйсен кунĕ ячĕпе Халăх Пухăвĕн Президиумĕ генералсен, офицерсен, старшинасен, сержантсен пысăк ушкăнне орденсем тата медальсем парса наградăланă.

Çăмăл атлетсен Ослори ăмăртăвĕ

ОСЛО, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Ослора тĕнчери тĕрлĕ çĕршывсенчи çăмăл атлетсен ăмăртăвĕ пуçланнă. Арçынсем хушшинче 100 метр чупса мала тухмалли ăмăртура малтанхи тăватă вырăна совет спортсменĕсем Л. Санадзе, В. Рябов, В. Сухарев, Б. Токарев йышăннă. 400 метр чупса пĕррĕмĕш вырăна паллă спортсмен А. Игнатьев йышăннă. 800 метр чупса пĕррĕмĕш вырăна Р. Карлсон (Швеци) йышăннă. Совет спортсменĕсем çак дистанцие чупмалли ăмăртăва хутшăнман.

Арçынсем хушшинче барьерсем урлă сиксе 400 метр чупмалли ăмăртура совет спортсменĕсем Ю. Литуев тата А. Юлин чи лайăх тĕслĕх кăтартнă. 4×100 метрлă эстафетăра совет спортсменĕсем В. Сухарев, Л. Каляев, В. Рябов тата Б. Токарев пĕррĕмĕш вырăн йышăннă. Норвеги спортсменĕсем иккĕмĕш вырăна тухнă.

Арçынсем хушшинче йĕтресем ывăтас енĕпе малти вырăна О. Григалка (СССР) йышăннă. Иккĕмĕш вырăнта—О. Стенеруд (Норвеги). Хĕрарăмсем хушшинче йĕтре ывăтас енĕпе тĕнче чемпионĕ Г. Зыбина мала тухнă.

Совет атлечĕ В. Кузнецов пуринчен те инçетерех сăнă ывăтнă.

Виçĕ хут ярса пусса сикмелли ăмăртура тĕнче рекордсменĕ Л. Щербаков (СССР) лайăх тĕслĕх кăтартнă.

Юри тунă чăрмавсем урлă каçса 3.000 метра чупас енĕпе В. Казанцев (СССР) малти вырăна йышăннă.

Хĕрарăмсем хушшинче инçете сикес тĕлĕшпе совет спортсменки А. Чудина малти вырăна тухнă.

Норвегире тухакан хаçатсем пурте паян совет спортсменĕсене мухтаса çыраççĕ. Хаçатсем çакна палăртаççĕ: çанталăк начар тăрать тата чупмалли çулсем пăсăлнă пулсан та, совет спортсменĕсем чаплă çитĕнÿсем тунă.

«Ворт ланд» хаçат çапла çырать: «Вырăс спортсменĕсем хăйсен класне кăтартрĕç, анчах Норвеги спортсменĕсем хушшинче вĕсемпе ăмăртма пултаракансем ытла та сахал. Вырăссем хăйсен вăйĕсене шеллемеççĕ. Вĕсем çине чупнă чухне те, сикнĕ чухне те, сăнă тата йĕтре ывăтнă чухне те пăхма кăмăллă. Вĕсем пысăк техникăна тата спорт енĕпе вăйлă пулнине кăтартрĕç».

США-па Кăнтăр Корея хушшинче тунă çар договорĕ çине алă пуснă

ВАШИНГТОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Вашингтонра США-па Кăнтăр Корея хушшинче тунă «пĕр-пĕрне хăрушсăрлăх кÿресси çинчен» текен çар договорĕ çине алă пуснă. Çак договора перемири çинчен килĕшÿ тунă хыççăн 10 кун иртсен тунă. Договор тăрăх США Кăнтăр Корейăра паллă мар нумай тапхăр хушши çĕр çинчи çарсем, тинĕс-çар, сывлăш-çар вăйĕсем тытса тăма пултарать. Кăнтăр Корея США колонийĕ тата вăрçă плацдармĕ пулса тăнине договор çирĕплетет.

США государство секретарĕ Даллес договор çине алă пуснă чухне, икĕпитленсе: Ли Сын Манпа тунă договор «мир тума пулăшать», тесе каланă. Анчах ку çар договорĕ агрессиллĕ тĕллев тытни тата Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине хирĕç пыни пурне те паллă.

Японипе Америка хушшинчи калаçусем

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 1-мĕшĕнче Вашингтона Япони миссийĕ пырса çитнĕ. Миссие Японин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Хаято Икеда ертсе пырать. Вăл премьер-министр Сигеру Иосидăн специальнăй представителĕ пулса тăрать. Мисси Америка правительствин представителĕсемпе Японие çĕнĕрен хĕçпăшаллантармалли плансем çинчен калаçусем ирттерет. США-н дипломатиллĕ ушкăнĕн представителĕсем пĕлтернĕ тăрăх, вĕсен шучĕпе, калаçусем ирттернĕ май США-на çитес сывăх вăхăтрах Япони премьер-министрĕ Иосида пырса çитме пултарать.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, калаçусем, тĕпрен илсен, Японири политика ĕçĕнчи лидерсем Японие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарасси çинчен туса хатĕрленĕ çĕнĕ план пирки пулса иртмелле. Çак план тăрăх Японин «хăрушсăрлăх çарĕ» тенĕскерĕн йышне пĕр çулталăк хушшинче 110 пин çынтан 250 пин çын таран ÿстермелле.

США-на пырса çитнĕ хыççăн Икеда корреспондентсене çапла пĕлтернĕ: Япони миссийĕ США-на Эйзенхауэр правительствине Япони правительстви туса хатĕрленĕ программăпа паллаштарма, вăл шутпа, Иосидăпа Сигемицу Японие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе туса хатĕрленĕ çĕнĕ планпа паллаштарма пынă.

Иранри лару-тăру

ПАРИЖ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран çапла пĕлтерет: ĕнер Иранри финанс министрĕн заместительне Али Мобашера арестленĕ. Али Мобашер Мосаддык правительствинче те, Захеди правительствинче те мĕн арестличченех, финанс министрĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ.

ТЕГЕРАН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Кейхан» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хуни çинчен калакан законăн 5-мĕш статьи тăрăх юлашки вăхăтра арестленĕ 1.800 çын ĕçне «малалла тĕпчесе тухма» çар прокуратури аллине панă.

Хаçатра çырнă тăрăх, Çамрăксемпе студентсен пĕтĕм тĕнчери 4-мĕш фестивальне хутшăннăшăн арестленĕ çамрăксен ĕçĕ тăрăх следстви пĕтмен-ха.

ПАРИЖ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран çапла пĕлтерет: октябрĕн 1-мĕшĕнче каçхине тата октябрĕн 2-мĕшĕнче ирхине Тегеранра Туде партийĕн 150 членне арестленĕ, 100 çынна Хузистан провинцийĕнчи Хорренабада кăларса янă. Вĕсем хушшинче—Иранри миршĕн тăракансен обществин ертсе пыракан комитечĕн членĕ Махмуд Хормоз тата «Хаджибаба» ятлă юмор журналĕн редакторĕ Парвиз Хатиби.

Тегеран хулин кăнтăр пайĕнче октябрĕн 2-мĕшĕнче полицие листовкăсем салатакан çынсем хушшинче тытăçу пулса иртнĕ.

ПАРИЖ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран çапла пĕлтерет: октябрĕн 1-мĕшĕнче каçхине Туде партийĕ майлă тăракан çынна пĕр салтак урам хушшинчех персе вĕлернĕ. Çав çын хула варринчи стенасем çине шаха хирĕç калакан лозунгсем çырса çÿренĕ пулнă. Çакăншăн салтакăн чинне ÿстернĕ тата премьер-министр ăна укçа парса наградăланă.

Хĕвеланăç Германире çар производствине вăйлатаççĕ

БЕРЛИН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Бонран илнĕ çакăн пек пĕлтерĕве парать: Хĕвеланăç Германире çар продукцийĕ туса кăларакан предприятисен шучĕ вĕçĕмсĕр ÿссе пырать.

Хальхи вăхăтра Хĕвеланăç Германире çар продукцийĕ туса кăларас тĕлĕшпе 400 ытла предприяти ĕçлет. Хĕвеланăç Германире çар промышленноçĕ хăвăрттăн вăйланса пыни çинчен çак факт та лайăх каласа парать. 1950 çултан пуçласа Хĕвеланăç Германин суту-илу балансĕнче стратегилле чĕртавар турттарса килесси икĕ хут ытла ÿснĕ. Сăмахрач, 1950 çулта çĕршыва тимĕр тата марганец руди 189 миллион маркăлăх, 1952 çулта—702 миллион маркăлăх, тимĕртен япала туса кăларакан промышленность продукцийĕ асăннă çулсенче—103 миллион тата 295 миллион маркăлăх, тĕслĕ металсем—301 миллион тата 625 миллион маркăлăх, çĕр кăмрăкĕпе кокс—175 миллион тата 872 миллион маркăлăх турттарса килнĕ.

Юлашкинчен пĕлтерÿре çар продукцийĕ туса кăларакан предприятисен списокне илсе кăтартнă. Вĕсем хушшинче Крупп, Флик, Маннесман, Сименс, И. Г. Фарбениндустри концернĕсен предприятийĕсене асăннă.

АГРЕССОРСЕМ ХУШШИНЧЕ КИЛĔШУ ÇУК

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ ООН штаб-хваттерĕнчен çапла пĕлтерет: Корейăна хăйсен çарĕсене янă чылай çĕршывсем «Пĕрлешÿллĕ Штатсем çарсене турттарса кайнăшăн тата вĕсене снаряжени парса тăнăшăн ытла та пысăк счет тăратнă пирки тĕлĕннĕ». ООН штаб-хваттерĕнче Колумби представителĕ çапла каланă: Колумби Корейăна янă пĕр батальона снаряжени парса тăнăшăн США-на çакăн чухлĕ укçа нумай тÿлемелле пуласси унăн çĕршывĕ пĕлнĕ пулсан, «çарсем çав снаряжение пăрахса хăварса киле таврăннă пулĕччĕç».

Автомашинăсем туянчĕç

ЕТĔРНЕ. Районти чылай колхозсем 1953 çулта çĕнĕ автомашинăсем туянчĕç. «Парижская коммуна» колхоз государствăна сĕт парса хатĕрлев кантурĕ урлă «ГАЗ-51» автомашина, Ильич ячĕпе, Маленков ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан колхозсем те пĕрер çĕнĕ автомашина туянчĕç.

Халĕ çак колхозсенче автомашинăсемпе государствăна пама çĕрулми турттараççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозри шофер Н. Николаев кулленех 3—4 рейс туса 8—10 тонна çĕрулми турттарать.

М. ФЕДОРОВ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКИ. Районти чылай колхозсем кăçал государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем тата çĕрулми сутса автомашинăсем туянаççĕ.

Шверник ячĕпе, Хрущев ячĕпе тăракан тата «Сталинград» колхозсем государствăна аш-какай сутса «ГАЗ-51» автомашинăсем туянаççĕ. «Пионер» колхоз государствăна сĕт сутса автомашина илет. «Большевик» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем государствăна 75-шер тонна çĕрулми сутрĕç, çавăншăн вĕсем те автомашинăсем туянаççĕ.

Халĕ районти чылай колхозсем 2—3-шер автомашина тытаççĕ. Маленков ячĕпе тăракан колхозăн 4 автомашина, пĕр тягач. Шверник ячĕпе тăракан тата «Сталинград», «Пионер», Хрущев ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем икшер автомашина тытаççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Элĕк районĕнче

■ **Техникăлла культурăсем пухса кĕртрĕç.** Шверник ячĕпе тăракан колхозра техникăлла культурăсене вĕçке срокра пухса кĕртрĕç. 50 гектар çинчи кантăра çапса шыва хутнă.

Çавăн пекех «Красное заря», «Трудовик», Ленин ячĕпе тăракан, «Молния» тата ытти колхозсем—пурĕ 14 колхоз çак кунсенче кантăр татса пĕтерчĕç.

◆ **Ăратлă такасем илсе килнĕ.** Районти колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ăратлăхĕ çулсеренех лайăхланать. Колхозсене сутма халĕ «советский меринос», «цыгай» ăратлă такасем нумай илсе килнĕ. «Правда», «Дружба» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем «советский меринос» текен виçшер така илнĕ.

◆ **Электростанци турĕç.** Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал Сурăм шывĕ çинче электростанци тума тытăнчĕ. Колхозниксем тăрăшса ĕçлесе иртнĕ уйăхра электростанцие туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Халĕ колхозниксен килĕсенче, обществăлла çуртсенче тата выльăх-чĕрлĕх витисенче электричество çутатать.

Районта халĕ тăватă колхозра электростанцисем тунă, вĕсем пурте Сурăм шывĕ çинче.

◆ **Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем.** «Динамо» колхоз кăçалхи çулшăн государствăна сĕт-çу, аш-какай, çăмарта памалли çулталăкри плана ытлашшипех тултарчĕ. Планран ирттерсе çитес çулшăн государствăна 10 пин çăмарта панă.

◆ **Ачасен библиотеки.** Районти библиотека çумĕнче ачасем валли уйрăм библиотека уçнă.

Библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен йышĕ кулленех ÿссе пырать.

◆ **Духовой оркестр.** Районти культура çурчĕ çумĕнче духовой оркестр кружокĕ организациленĕ, унта 21 çын вĕренет. Кружока музыка училищинче вĕреннĕ Ф. Семенов музыкант ертсе пырать. Кружок занятийĕсем йĕркеллĕ иртеççĕ.

Культура çурчĕ кружок валли нумай пулмасть 11 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ музыка инструменчĕсем илсе панă.

МОТОЦИКЛПА ÇÿРЕМЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ЙĔПРЕÇ. Йĕпреçри вăтам шкул мотоцикл илнĕ. Шкулта мотоцикл кружокĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Кружокра 25 ача вĕренет. Ăна физика преподавателĕ Б. Тепловский юлташ ертсе пырать.

В. ТИМОФЕЕВ.

Атăл çинче

Юлашки вăхăтра тăтăшах çумăр çунипе Атăл шывĕ хăвăрт хушăнса пычĕ. Шыв çуллахи вăхăтра пĕр шайра тăнă, ун хыççăн сентябрĕн 3-мĕшĕнче хушăнма пуçланă та, пĕр уйăх хушшинче, октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне, пурĕ 334 сантиметр хушăннă. Сентябрĕн 20-мĕшĕнче пĕр талăкра 20 сантиметр хушăннă.

Ĕнер ирхине 8 сехет тĕлне сывлăшра 7,8 градус, шывра 8,8 градус ăшă пулнă.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО

«УДАРНИК»—октябрĕн 4-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Над Неманом рассвет». Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м., 20 с. 15 м., 22 с. 15 м.

«Росглавмаслосырпромăн» Чăваш республикинчи тресчĕ çакăн çинчен пĕлтерет:

республикăри çупа сыр завочĕсен сĕт илекен пункчĕсем пурте сĕт сутăн илеççĕ. Сĕт сутакансене кашни пĕр литр сĕтшĕн 1 тенкĕ те 20 пус, пĕр килограмм шăратнă çушăн 21 тенкĕ тÿлеççĕ. Сĕтпе çу уйрăм граждансенчен тата колхозсенчен пуринчен те илеççĕ.

Сĕтпе çу сутакансене вĕсем сутнă сумма чухлех промышленность таварĕсем (йывăç, шифер, пăта, çурт çине витмелли тимĕр тата ытти таварсем те) сутаççĕ.

«Росглавмаслосырпром» тресчĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01491 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.